24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
16
КĔÇНЕРНИКУН
13 (5728) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

СУЙЛАВ КАМПАНИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ИРТТЕРЕР!

Паян, январĕн 16-мĕшĕнче, 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ, 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ, 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Советне тата уйрăм округсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйлас кампани пуçланчĕ. Суйлав кампанинче СССР Верховный Советне 3 депутат, районри Советсене 18 депутат, хула Совечĕсене 5 депутат тата ял Совечĕсене 163 депутат суйламалла.

Уйрăм округсенче ĕççынни депутачĕсене суйласси пĕтĕмĕшлĕ суйлавсенчи пек икĕ уйăх хушшинче мар, пĕр уйăх хушшинчех пулса иртет. Анчах суйлавсене кĕске срокра ирттерни унăн пĕлтерĕшне нимĕн чухлĕ те пĕчĕклетмест. Йăлтах урăхла, суйлавсене кĕске срокра ирттерни парти тата совет организацисем çине пысăк ответлăх хурать, вĕсем умне суйлав кампанине кĕске срокрах большевикла тимлĕхпе ирттерес задачăна кăларса тăратать.

Суйлав умĕн 20 кун малтан суйлавçăсен списокĕсене пурте пăхса тухма кăларса çакмалла. Çапла ĕнтĕ суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕслеме тата вĕсене тӳрлетме пурĕ те вунă кун кăна юлать.

СССР Верховный Совечĕн тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен малтанхи суйлавĕсем хыççăн суйлав участокĕсенчи халăх хушшинче пысăк улшăнусем пулчĕç. Çавăнпа та суйлавçăсен списокĕсене питĕ тăрăшса, тĕплĕн тумалла, пĕр суйлавçăна та списока кĕртмесĕр хăвармалла мар, кашни гражданина хăйĕн правипе туллин усă курма май памалла.

Участоксенчи тата округсенчи суйлав комиссисен членĕсем пулма кандидатсем тăратасси — суйлав кампанинчи ответлă тапхăр. Çак ĕçе питĕ тĕплĕн шухăшласа, пысăк ответлăха туйса тумалла, мĕншĕн тесен комиссисем тепĕр 2 — 5 кунтан ĕçе тытăнмалла, вĕсенче чи шанчăклă çынсем ĕçлемелле.

Халĕ пур çĕрте те иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнчи суйлав участокĕсен пурлăхĕсем мĕнле сыхланса юлнине тĕрĕслес пулать, вĕсене хăвăрт йĕркене кĕртмелле, суйлав участокĕсем пулмалли çуртсене тĕрĕслемелле, вĕсене çийĕнчех хатĕрлесе хумалла. Кунта çакна асра тытас пулать: иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнчи суйлав участокĕсенчи пурлăхсем халĕ чылай çĕрте унта-кунта сапаланса выртаççĕ, суйлав комиссисем ĕçленĕ çуртсенче йĕркеллĕх çителĕксĕр.

Иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕшĕн большевикла ĕçлекен агитаторсен мухтавлă çарĕ ӳссе çитĕнчĕ. Суйлав участокĕсенче агитаторсем пулса, суйлав комисси членĕсем, доверённăйсем пулса пиншер çын ĕçлерĕç. Паянтан пуçланакан суйлав кампанийĕ çак актива тата ытларах ӳстерме, хуласемпе ялсенчи активăн çĕнĕ вăйне явăçтарма май парать. Партипе совет организацисен, агитколлективсен хисеплĕ задачи — хăйсен округĕсенчи, участокĕсенчи кашни суйлавçăна çитес суйлавсен пĕлтерĕшĕ çинчен тата унăн техники çинчен тĕплĕн ăнлантарса парасси пулать. Суйлав участокĕсенче, округсенче политикăллă-массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса, рабочисене, колхозниксене, совет интеллигенцине промышленноçпа ялхуçалăхĕнче тата культура фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тума, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн большевикла кĕрешме мобилизацилемелле.

Республикăри нумай предприятисемпе колхозсем, машинно-тракторнăй станцисем, аласталăх артелĕсем партипе правительство панă заданисене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Çакна эпир чылай предприятисем иртнĕ çулти производство программисене ирттерсе тултарнинчен, колхозсем вăйлă тырпул туса илнинчен лайăх куратпăр. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе сарăлса кайнă социализмлă ăмăртун çĕнĕ хумĕ 1941 çулта та республикăри предприятисемпе колхозсем пысăк çĕнтерӳсем тăвасса шанса тăрать. Уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Советне тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене депутатсем суйлама тата ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленесси коммунизм строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешес паллăпа пулса пымалла. Партипе совет, профсоюз тата комсомол организацисен, рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци хушшинче организациллĕ тата массăллă ĕçе анлăн сарса, массăсене ĕç дисциплинине çирĕплетме продукци пахалăхне лайăхлатма мобилизацилемлле.

Виçĕ округ тăрăх СССР Верховный Советне тата уйрăм округсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйлас кампани Пĕтĕм Совет Союзĕнчи, çавăн пекех пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ нихăçанхинчен хăватлă çĕкленнĕ тапхăрта пулса иртет. Нумай пулмасть Карело-Финн СС Республикинчи, Украина тата Белорус СС Республикисен хĕвеланăç облаçĕсенчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен, Молдаван, Эстони, Латви, Литва СС Республикисенче СССР Верховный Совет суйлавĕсем пулса иртрĕç. Çак суйлавсенче те коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ турĕ. Виçĕ округ тăрăх СССР Верховный Совечĕн уйрăм округсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕсем те Чăваш республикинчи ĕççыннисем коммунистсен партийĕ тавра, аслă Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине татах та тепĕр хут кăтартса парĕç.

1941 çулти январĕн 12-мĕшĕнче Эстони, Латви, Литва, Бессараби, Çурçĕр Буковина халăхĕсем — капиталистсемпе помещиксен пусмăрĕнчен ирĕке тухнă халăхсем — хăйсен государство влаçĕн аслă органне депутатсем суйларĕç. Вĕсем суйлава советлă социализмлă демократизм никĕсĕ тăрăх, Совет Союзĕн Сталинла Конституцийĕ тăрăх хутшăнчĕç. Çакă вăл ирĕке тухнă халăхсем Сталинла Конституци ялавĕ айне тăрса, хăйсен çĕршывĕнче социализм строительствине аталантарас ĕçе çирĕппĕн тытăнни çинчен калать.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем те 1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче Сталинла Конституцин аслă правипе анлăн усă курса сасăлĕç. Вĕсем çак кун суйлав урнисем патне коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ тăратнă кандидатсене СССР Верховный Совет депутатне тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен депутатне суйлас ĕмĕтпе пырĕç.

1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче — çак савăнăçлă та телейлĕ кунра — суйлавçăсем хăйсен сасĕсене халăхăн шанчăклă, Ленин—Сталин ĕçне чĕререн парăннă ывăлĕсемшĕн парĕç, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ тепĕр чаплă çĕнтерӳ тăвĕ.

Виçĕ округ тăрăх СССР Верховный Совечĕн тата уйрăм округсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлав кампанине анлăн вăйлатса пырар!

Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн!

Каунасри митингсем

КАУНАС, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ туни çинчен калакан пĕлтерĕве Литвари ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн савăнса кĕтсе илнĕ.

Паян «Металас», «Нерис», «Майстас», «Гума», «Инкарас» предприятийĕсенче тата ытти çĕрте те нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Прибалтикăри пурçăн тĕртекен «Кауно Аудиняй» ятлă питех те пысăк фабрикăри митинг уйрăмăнах пысăк хавхаланупа иртнĕ, вăл фабрикăра Национальноçсен Совечĕн депутачĕ Ядвига Буджинскиене ĕçлет.

Ватă ткачиха Гележунине юлташ çапла каланă:

— Пирĕн беспартийнăй рядовой работница Ядвига Буджинскиене халиччен, пурсăмăр пекех, фабрикантсен тискер эксплоатацине тӳссе пурăннă çын, халĕ ĕнтĕ хăватлă, аслă çĕршыв Верховный Совечĕн депутачĕ пулса тăчĕ, çакăншăн эпир пĕтĕм чĕререн савăнатпăр. Эпир иккĕленместпĕр: Буджинскиене юлташ халăхăн шанчăклă тарçи, ĕççыннисемпе тăван çĕршыв интересĕсене, Ленинпа Сталин пекех, пĕтĕм чĕререн парăннă çын пулĕ.

Вилене, Гиркантене, Грилюс, Скинкис юлташсем тата ыттисем те: суйлавсенче Советлă Литвари ĕççыннисем хăйсем совет влаçĕпе коммунистла партине пĕтĕм чĕререн парăннине кăтартса пачĕç, тесе каланă. Тухса калакансем халăх суйланă çынна Буджинскиене юлташа ăшă кăмăлпа саламланă, государствăллă пысăк ĕçре ăна çитĕнӳсем тума суннă.

Ядвига Буджинскиене сăмах ыйтсан митингри халăх нумайччен алă çупнă:

— Мана суйлавçăсем шаннăшăн, пысăк чыс тунăшăн тав тăватăп, юлташсем,—тенĕ вăл.—Пирĕн аслă Совет Союзĕ малалла ӳссе чечеклентĕр тесе, халăхсен сталинла туслăхĕ ӳссе пытăр тесе, эпĕ пĕтĕм вăйхалăма паратăп.

Çĕнĕрен 400 шкул

ЛЬВОВ. 1940 çулта облаçра çĕнĕрен 400 шкул уçнă, вĕренекенсен хисепĕ 122 пин çынна яхăн ӳснĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнчи итогĕсем кăтартнă тăрăх, шкулсенче вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 85,5 процент шутланать. 987 класра ĕлкĕрсе пырайман учениксем пĕрре те çук. Перемышльри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта, Львоври 4-мĕш номерлĕ шкулта тата ытти шкулсенче вĕренекенсем вĕренӳре 100 проценчĕпех ĕлкĕрсе пыраççĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

496-мĕш №-лĕ Шупашкар суйлав округĕнчен, 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕнчен тата 506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕнчен Национальноçсен Советне депутатсем суйламалли кун çинчен

1. 496-мĕш №-лĕ Шупашкар суйлав округĕнчен, 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕнчен тата 506-мĕш №-лĕ Етĕрне суйлав округĕнчен Национальноçсен Советне 1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче депутатсем суйламалла тăвас.

2. Çак округсенче суйлав кампанийĕ 1941 çулти январĕн 16-мĕшĕнче пуçланни çинчен пĕлтерес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти январĕн 7-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Уйрăм суйлав округĕсем тăрăх СССР Верховный Советне депутатсем суйламалли суйлав кампанин срокĕ çинчен

1. Çапла тăвас: уйрăм суйлав округĕсем тăрăх СССР Верховный Советне депутатсем суйламалли суйлавсене ирттернĕ чух суйлав кампанийĕ «СССР Верховный Советне суйламалли Положенире» пĕтĕмĕшпе суйлавсем валли палăртса хунă пек икĕ уйăх маларах пуçланас вырăнне, çав суйлав округĕнчи суйлавсен кунĕ çитиччен пĕр уйăх маларах пуçланмалла.

Çакна май:

а) ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕсем суйлавçăсен списокĕсене пурне те кăтартма суйлавсем пуçланиччен 20 кун маларах кăларса çакаççĕ;

б) суйлав участокĕсене туса йĕркелес тата участоксенчи суйлав комиссийĕсене çирĕплетес ĕçе суйлавсем пуçланиччен 25 кунран кая юлмасăр малтан, округ суйлав комиссийĕсене çирĕплетес ĕçе суйлавсем пуçланиччен 28 кунран кая юлмасăр малтан туса ирттереççĕ;

в) СССР Верховный Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсене суйлавсем пуçланиччен 15 кунран кая юлмасăр малтан округ суйлав комиссийĕсенче регистрацилеççĕ, депутата суйлама тăратнă, регистрациленĕ кандидат çинчен калакан даннăйсене тата кандидата тăратнă обществăллă организацисен ятне суйлавсем пуçланиччен 12 кунран кая юлмасăр малтан пичетлесе кăлараççĕ.

2. «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 76-мĕшпе 89-мĕш статьисене улăштарса, çапла тăвас: сасăланă чухне бюллетеньсене конвертсемсĕр параççĕ тата сасăсене шутлас ĕçе шутлав листисемсĕр тăваççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1940 çулти ноябрĕн 11-мĕш.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинче вырăнти Советсен составĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене çĕнĕ депутатсем суйламалли кун çинчен

1. Чăваш АСС Республикинче вырăнти Советсен составĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене 1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче çĕнĕ депутатсем суйламалла тăвас.

2. Суйлавсем пулмалли округсенче суйлав кампанийĕ 1941 çулти январĕн 16-мĕшĕнче пуçланни çинчен пĕлтерес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули,
1941 çулти январĕн 15-мĕш.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинче вырăнти Советсен составĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене çĕнĕ депутатсем суйламалли суйлав кампанин срокĕсем çинчен

1. Çапла тăвас: вырăнти Советсен составĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне уйрăм суйлав округĕсем тăрăх ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене çĕнĕ депутатсем суйламалли суйлав кампанийĕ «Чăваш АСС Республикинчи ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене суйламалли Положенире» палăртса хунă пек икĕ уйăх маларах пуçланас вырăнне, суйлавсен кунĕ çитиччен пĕр уйăх маларах пуçланмалла.

Çакна май:

а) суйлавçăсен списокĕсене суйлавсем пуçланиччен 20 кунран кая юлмасăр малтан туса çитермелле;

б) округ суйлав комиссийĕсене суйлавсем пуçланиччен 25 кунран кая юлмасăр малтан çирĕплетмелле;

в) суйлав участокĕсене туса йĕркелес тата участоксенчи суйлав комиссийĕсене çирĕплетес ĕçе суйлавсем пуçланиччен 20 кунран кая юлмасăр малтан туса пĕтермелле;

г) ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсене, суйлавсем пуçланиччен 15 кунран кая юлмасăр малтан, тивĕçлĕ округ суйлав комиссинче регистрацилемелле;

д) депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен калакан даннăйсене тата кандидатсене тăратнă обществăллă организацисен ячĕсене суйлавсем пуçланиччен 10 кунран кая юлмасăр малтан пичетлесе кăлармалла.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
Г. ГУСЕВ.

Шупашкар хули, 1941 çулти январĕн 15-мĕш.

КОММУНИСТСЕМПЕ БЕСПАРТИЙНĂЙСЕН СТАЛИНЛĂ БЛОКĔ ТУНĂ ЧАПЛĂ ÇĔНТЕРӲ

Советлă Молдавири ĕççыннисен уявĕ

КИШИНЕВ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Молдави Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Розовецкий юлташ çапла каланă:

— 1941 çулти январĕн 12-мĕш кунĕ—СССР тата Молдаван ССР Верховный Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртнĕ кун — союзлă çамрăк республикăри ĕççыннисемшĕн пĕтĕм халăхăн аслă праçникĕ, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ тунă кун пулса тăчĕ.

Ирĕке тухнă Советлă Молдавири граждансем çак кун хăйсен чаплă организованноçне, Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, хăйсен социализмлă тăван çĕршывне хĕрӳллĕн юратнине кăтартса пачĕç.

Сасăланин результачĕсем молдаван халăхĕн политикăллă ăнланулăхĕ пысăк пулнине кăтартса пачĕç. Молдаван халăхĕ çакна лайăх пĕлет: ĕççыннисен ырлăхĕшĕн совет влаçĕ тата большевиксен партийĕ кăна ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Молдавири ĕççыннисем суйлавсене татти-сыпписĕр юхăм пек пычĕç. Бендеры, Рыбницк тата Дубоссар районĕсенче суйлавçăсем 100 проценчĕпех суйлавсене хутшăннă, Кишиневпа Сороки уезчĕсенче—99,9 процент. Суйлавçăсем, хăйсен пурнăçĕнче питех те пысăк событи пулса тăракан суйлавсене хатĕрленсе, суйлав участокĕсене питех те пысăк юратупа илемлетсе йĕркелерĕç. Страшены ялĕнчи хресченсем суйлав участокĕсене илемлетме 150 ковер-гобелен ытла илсе пынă.

Суйлавсене хатĕрленни—ĕççыннисен политикăллă пысăк шкулĕ пулса тăчĕ. 26.000 çын агитаторсем пулса ĕçлерĕç. Суйлав кампанийĕ производствăллă çĕкленĕве питех те вăйлăн хăпартса ячĕ. Çак вăхăт хушшинче республикăри предприятисенчи стахановецсен хисепĕ ик-виç хут ӳсрĕ. Воронковри известь заводĕнчи стахановецсем — пĕртăван Антон тата Иосиф Ярошевскисем, суйлав умĕн илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе, пĕрмаях виççĕ çурăшар нормă тултарса пынă, Кишиневри авторемонт мастерскойĕнчи бригадир Нямцу юлташ—380 процент, Кишиневри трикотаж фабрикинчи вязальщицăсем—Ройзман, Зубрицкая, Глязнер юлташсем т. ыттисем те 1,5-шер, 2-шер норма тултарса пынă.

Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче пухнă çĕнĕ опытпа кулленхи ĕçре, советлă çамрăк республикăри социализм строительствинче усă кураççĕ.

Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ

КАУНАС, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Литва ССР Вăхăтлăх Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Палецкис юлташ çапла каланă:

— СССР Верховный Советне депутатсем суйлас ĕç Советлă Литвара пур çĕрте те пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Суйлавсем Литвари ĕççыннисем тачă пĕтĕçсе тăнине, вĕсем Совет влаçне тата коммунистла партине пĕтĕм чĕререн парăннине кăтартса пачĕç.

Тăшманла элементсем агитаци туса пынă пулсан та, суйлавсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерӳ турĕ. Пур суйлав округĕсенче те суйлавçăсен чи пысăк пайĕ коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Питех те нумай суйлав округĕсенче сасăланă çĕре суйлавçăсем 100 проценчĕпех хутшăннă. Зарасай суйлав округĕн территоринче кĕрекен Швенчионель уездĕнче пур çĕрте те пĕтĕм суйлавçăсен 99,97 проценчĕ сасăланă. Суйлавсем хуласенче те, çавăн пекех ялсенче те активлă иртнĕ. Укмергски суйлав округĕнчи Богослава, Муснинкай, Свирнай ялĕсенче январĕн 12-мĕшĕнче 14 сехет тĕлне пур суйлавçăсем те сасăласа пĕтернĕ. Тельшай суйлав округĕнче 5 ял хресченĕсем суйлав участокне организованно пынă.

Январĕн 12-мĕш Литва халăхĕн пурнăçĕнчи историллĕ кун пулса тăчĕ. Çакă вăл пĕтĕм халăх савăнăçĕ пулчĕ. Советлă Литва хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене социализмăн аслă çĕршывĕнчи государство влаçĕн аслă органне суйларĕ.

Ригăри ĕççыннисен митингĕсем

РИГА, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ мухтавлă çĕнтерӳ туни çинчен калакан хыпар Латвири ĕççыннисене пĕтĕм чĕререн савăнтарнă. Пур çĕрте те предприятисенче нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ, вăл митингсенче ĕççыннисем суйлавсен результачĕсем хăйсене савăнтарнине, хăйсен социализмлă аслă тăван çĕршывĕпе коммунистла партине юратнине кăтартса панă.

«Парижская Коммуна» ятлă пиравăр фабрикинчи коллектив хăй пĕр шухăшлă пулса йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Суйлавсен итогĕсем çакна нимĕн иккĕленмелле мар кăтартса параççĕ: Латвири ĕççыннисем коммунистла партипе, мĕнпур ĕççыннисен генийллĕ çулпуçĕ, тусĕ тата ашшĕ—аслă Сталин ертсе пыракан партипе тачă çыхăнса тăрать.

Эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр, эпир суйланă депутатсем хăйсем çине Латви халăхĕ хунă аслă обязанноçсене пĕтĕм вăйпа çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырĕç. Хамăр енчен тăван çĕршыв пуянлăхĕсене ӳстерсе пыма, ĕç тухăçлăхне çӳлерех те çӳлерех хăпартса пыма сăмах паратпăр.

«Вэф», «Сарканас Звайчэне», «Ригас мануфактура» фабрикисенче тата Ригăри ытти предприятисенче те пысăк хавхаланулла митингсем пулса иртнĕ.

Латви халăхĕн савăнăçĕ

РИГА, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Латви ССР Вăхăтлăх Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Кирхенштейнс юлташ çапла каланă:

— Латви СС Республикинчен СССР Верховный Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе пулса иртнĕ суйлавсем коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокне чаплă çĕнтерӳсем кӳчĕç.

Вырăнсенчен илнĕ туллимар сведенисем тăрăх, сасăланă çĕре пĕтĕм суйлавçăсен хисепĕнчен 96 процент ытларах хутшăннă. Эпир халĕ илнĕ цифрăсем те çакна лайăх кăтартса параççĕ: рабочисем, хресченсем тата ĕç интеллигенцийĕ, пĕтĕм Латви халăхĕ, пĕр çын пек пĕр кăмăллă пулса, совет влаçĕшĕн, коммунистла партишĕн, Сталин юлташшăн сасăларĕç.

Ĕççыннисем суйлав участокĕсене савăнăçлăн пычĕç. Ирхине 6 сехетчен нумай малтанах суйлав участокĕсем умне çĕршер ĕççынни пухăнса тăнă. Ялсенче те çавăн пекех пулнă. Ригăри тата ытти хуласенчи ĕççыннисем суйлав участокĕсем патне организованно, хĕрлĕ ялавсемпе, музыкăпа пынă. Суйлавсене çапла коллективлăн пынипе ĕççыннисем хăйсем пĕр шухăшлă пулнине, хăйсен организованноçне та та коммунистла партипе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартса парасшăн пулнă.

Суйлавçăсем суйлавсене, уява кайнă пек, савăнса пынă. Агитпунктсенче суйлавçăсем умĕнче художествăллă пултарулăх коллективĕсем, опера, театр тата цирк артисчĕсем выступленисем тунă. Çамрăксем ташă-юрăпа савăннă.

Сĕм çĕрлеччĕнех хаваслăх, савăнăç тапса тăнă. Çакăн пек суйлавсем Ригăра халиччен нихăçан та пулман-ха.

Январĕн 12-мĕш кунĕ—Совет влаçĕ капитализм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă рабочисемшĕн, Совет влаçĕ çĕр панă хресченсемшĕн, халăх ырлăхĕшĕн ĕçлеме кирлĕ условисем илнĕ интеллигенцишĕн хаваслă праçник пулса тăчĕ. Хĕрарăм обществăллă аслă ĕçĕн пĕртан праваллă участници пулнине пирвайхи хут туйса илчĕ. Суйланă депутатсем хушшинче—6 хĕрарăм.

СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсем пĕтĕм Латви халăхĕн чăн-чăн савăнăçĕ пулса тăчĕç.

Ленин кунĕсем умĕн

Столицăри предприятисем Ленин кунĕсене тимлĕн хатĕрленеççĕ. Владимир Ильич ячĕпе тăракан заводра кадрти ватă рабочисем Ленин вĕсен заводне пырса кайни çинчен каласа кăтартаççĕ. Январĕн 7-мĕшĕнче Ленинăн «Империализм — капитализмăн чи çӳлти сыпăкĕ» кĕнеки çинчен партипе хуçалăх активĕ валли лекци ирттернĕ. Парткабинетра выставка уçалнă.

М. И. Калинин ячĕпе тăракан «Фрезер» заводра агитаторсем «17 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе» темăпа калаçусем тума хатĕрленеççĕ. Цехсенче Горький тата Маяковский Ленин çинчен çырнă произведенисен уйрăм сыпăкĕсене вуласа параççĕ.

Метростроевецсен общежитийĕсемпе çурчĕсенче Ленин çинчен тунă калаçусем пысăк интереспе иртнĕ. Метростройăн парткабинетĕнче Владимир Ильич произведенийĕсен выставки уçалнă. В. И. Ленин музейне экскурсисем организацилеççĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Вăрмар райкомĕн пленумĕ

1941 çулти январĕн 1-мĕшĕнче ВКП(б) Вăрмар райкомĕн черетлĕ VI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленумра пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе кандидат группisen парторгĕсем пулчĕç. Пленум икĕ ыйту — районра массăллă-политикăллă агитаци ĕçĕ мĕнле пулса пыни тата 1940 çулти ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче парти ретне илес ĕç мĕнле тăни çинчен ВКП(б) райкомĕн отчетне сӳтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Никитин юлташ 1940 çулта районри колхозсенче тата предприятисемпе учрежденисенче массăллă-политикăллă ĕç мĕнле пулса пынине кăтартса, ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртрĕ.

ВКП(б) XVIII съезчĕ парти умне ĕççыннисене коммунистла воспитани парас задача лартрĕ. Ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре агитколлективсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Анчах агитаци ĕçĕ районри колхозсенче пĕр енлĕ пулса пырать-ха. Эпир агитацин пахалăхĕшĕн мар, шучĕшĕн тăрăшнă: çав колхозра çавăн чухлĕ агитатор, вĕсем çавăн чухлĕ докладсем ирттернĕ, тетпĕр, анчах çав докладсен содержанийĕ енне, пахалăхĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă.

Стена хаçачĕсем колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ пулин те, вĕсем тивĕçлĕ вырăнта тăраймаççĕ, стахановецсен, колхозра тӳрĕ кăмăлпа, тăрăшса ĕçлекенсен опычĕсене çутатса пырса ытти колхозниксене пример парайман. Районри колхозсенчи стена хаçачĕсем, çав шутрах районри «Хĕрлĕ ялав» хаçат та, агитаторсене пулăшса пырайман, агитаци ĕçĕн формисене, меточĕсене, агитаци мĕнле усă пани çинчен çутатас вырăнне час-часах статистикăллă сводкăсем анчах пичетленĕ. Çавăн пекех агитаци ĕçне хуçалăхлă задачăсемпе çыхăнтарса пырайманнипе районра хатĕрлев, укçа-тенкĕ пухас ĕçре тĕрлĕ çитменлĕхсем пулса пынă.

ВКП(б) райкомĕ агитаторсене уйăрса çирĕплетес, вĕсене куллен ертсе пырас ĕçе те çителĕклĕ туса пырайман Райком аппаратĕнче ĕçлекенсем вырăна тухса докладсемпе лекцисем сахал ирттернĕ. Районра 21 пуçламĕш парторганизаци тата 6 кандидат группи, анчах вĕсенчен колхозсенче 10 пуçламĕш парторганизаципе 3 кандидат группи çеç шутланаççĕ. 55 колхозран 14 колхозра пĕр коммунист та çук. Çакнашкал колхозсем çумне агитколлектив руководителĕсене районри партактивран çирĕплетнĕ. Вĕсем те хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пыраймаççĕ.

Партин пуçламĕш организацийĕсем агитколлективсене ертсе, пулăшса пынă çĕрте колхозсем аван ĕçлеççĕ, пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Сăмахран, Арапуçĕнчи «Арабось» колхозри парторганизаци (секретарĕ М. Степанов юлташ) агитаторсемпе куллен ĕçлесе пырать. Стена хаçачĕ вăхăтра тата лайăх тухса тăрать. Çапла ĕçлесе пынипе колхоз пур ĕçсем енĕпе те малти рете тухрĕ.

Çавăн пекех Çĕнĕ Вĕренерти «Хĕрлĕ Марат», Кив Шулхантти «Смычка» т. ыт. колхозсем аван ĕçлеççĕ.

Мăнçырмари парторганизаци территорине виçĕ колхоз кĕрет. Анчах колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çуракине хатĕрленес, транспорт хуçалăхне йĕркелес ĕçсем япăх тăраççĕ.

Çавăн пекех политикăллă ĕçе районри предприятисемпе учрежденисенче те япăх туса пынă.

Районра 955 агитатор шутланать, вĕсенчен 145 коммунист. Лайăх ĕçлекен агитаторсем пур. Энĕшпуçĕнчи Г. Николаев юлташ 50 çултан иртнĕ пулин те хăйĕн пĕлӳне куллен ӳстерсе пырать, масса хушшинче активлă ĕçлет. Шăхальри вулав çурчĕн заведующийĕ Краснов юлташ та вулав çурчĕн ĕçне лайăхлатнă. Ялсоветпа, обществăллă организацисемпе çыхăнса ĕçлесе пынипе политикăллă агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Пленума пынă юлташсенчен пĕрремĕш ыйтупа 13 çын тухса каларĕç. Вĕсем колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче массăллă-политикăллă агитаци ĕçне тишкерсе малалла ĕçлеме çул кăтартса пачĕç.

Пленум ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва сарса пыма, политикăллă агитаци ĕçне тĕпрен лайăхлатма йышăнчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа парти райкомĕн секретарĕ Байков юлташ 1940 çулти ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче парти ретне илес ĕç мĕнле пыни çинчен отчетлă доклад туса пачĕ.

Çак икĕ уйăх хушшинче парти ретне 2 çынна кандидата тата 4 çынна парти членне илнĕ. Парти кандидачĕсем хушшинче кандидат стажĕ тухнисен хисепĕ йышлансах пырать. Парти ретне илнĕ юлташсенчен служащисем ытларах, колхозра ĕçлекенсем сахал.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче парти ретне илес йĕркене пăснисем те пулнă, материалсене йĕркеллĕ хатĕрлемен.

Пленум ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, ВКП(б) райкомĕн бюроне инструкторсемпе ĕçлессине вăйлатма, парторганизаци секретарĕсемпе час-часах семинарсем иртерме хушса хăварчĕ.

И. Степанов.

* * *

Çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар

Январĕн 9-мĕшĕнче ВКП(б) Куславкка райкомĕн VI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум МТС-чи тракторсене, ытти ялхуçалăх машинисене юсас, кадрсем хатĕрлес, партиллĕ-политикăллă ĕçсем мĕнле тăни çинчен пăхса тухрĕ.

МТС директорĕ Горбунов, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Сергеев юлташсем тунă докладсенчен тата ытти юлташсем тухса каланисенчен юлашки вăхăтра МТС-че политикăллă-массăллă ĕç лайăхланса, ĕç дисциплини çирĕпленсе пыни палăрчĕ. Çавна май трактористсем хушшинче политикăллă темăсемпе калаçусем, докладсем пулса иртеççĕ. Стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать. МТС 1940 çулти IV-мĕш кварталти ремонт планне тултарнă.

Çаксемпе пĕрлех пленум МТС ĕçĕнче çитменлĕхсем пуррине те палăртрĕ. Çав çитменлĕхсенчен пĕри вăл—кадрсем хатĕрлес ĕç начар тăни. Трактористсен курсĕнче 40 çын вĕренмелле пулсан, паянхи куна 28 çын çеç вĕренеççĕ. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем трактористсем хатĕрлес ĕç çине ытла та ответсăр пăхнипе трактористсен курсĕнче вĕренме паянхи кун та çынсем уйăрса ямаççĕ. Вĕсен шутне Аманик, Мужар, Тĕрлемес, Юпсар, Ярмас колхозĕсене кĕртмелле. Производствăран уйăрăлмасăр тракторист пулма вĕрентес ĕç тӳсме çук начар пырать. МТС дирекцийĕпе ВЛКСМ райкомĕ тачă çыхăнса ку ĕçе организацилес вырăнне, пĕри теприн çине ытларах шанса ларнă.

Трактористсемпе курсра вĕренекенсем валли пурăнмалли условисем питех çителĕксĕр. Вĕсем пурăнакан çурт сивĕ, таса мар, МТС дирекцийĕ вĕретнĕ шыв та çителĕклĕ тытаймасть. Çавнашкалах коопераци организацийĕсем те МТС-че ĕçлекен трактористсемпе курсра вĕренекенсем валли куллен кирлĕ таварсем кӳрсе килме, столовăйри апат-çимĕçе лайăхлатма тăрăшмаççĕ.

ВКП(б) райкомĕн пленумĕ пур ыйтусене те тĕплĕн сӳтсе-явса, МТС ĕçне малалла лайăхлатма май паракан решени йышăнчĕ.

Н. Мранька.

Колхозсенчи стена хаçачĕсен ăмăртăвĕ

ĂМĂРТĂВА ХУТШĂНАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Прогресс» колхозри «Стахановец» стена хаçат редколлеги членĕсем колхозсенчи стена хаçачĕсен республикăри ăмăртăвне пуçарса ярасси çинчен çырнă çыру хаçатсем çинче пичетленсе тухсанах, районри чылай колхозсенчи стена хаçатсен редколлеги членĕсен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Канашлусенче «Стахановец» хаçат пуçарăвне ырласа, партин XVIII конференци ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, конкретлă обязательствăсем илнĕ.

«Янмурзино» колхозра «Большевик» стена хаçат редколлеги членĕсен канашлăвĕ çакна палăртнă. Стена хаçачĕ колхоз пурнăçĕнчен уйăрăлса кайнă. Хăй тавра ялхуçалăхĕнче малта пыракансене, стахановецсене, бригадирсене, звеноводсене, фермăра ĕçлекенсене явăçтарман, вĕсен паха опычĕсемпе интересленмен. Хаçат çине çыракансем сахал пулнă.

Редколлегин колхоз активĕпе (бригадирсемпе, звеноводсемпе, стахановецсемпе) пĕрле пулса иртнĕ канашлăвĕ стена хаçат ĕçне лайăхлатма пулчĕ. Стена хаçачĕ халиччен уйăхра 2 номер тухнă пулсан, малашне виçĕ номер кăлармa йышăннă.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра та «Стахановец» стена хаçат пуçарăвне ырлаççĕ. Унти «Тăван çĕршывшăн» хаçат иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçре колхоза чылай пулăшнă. Вăл малта пыракан колхозниксене мухтанă, ĕçри дезорганизаторсене критикленĕ. Колхоз иртнĕ çулта гектартан вăтам шутпа 105 пăт тĕштырă туса илнĕ. Ку колхоз кăçал та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Çуракине хатĕрленессипе малтанхи ĕçсене туса çитернĕ.

Стена хаçачĕ Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентес çĕрте те чылай пулăшрĕ. Халĕ колхозра икĕ группа организациленĕ. Унта Хĕрлĕ Çарăн запасри командирĕсем вĕрентеççĕ. Яманакра та стена хаçачĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ.

М. П.

* * *

Вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçне урăхлатса çĕнетни кирлĕ

Вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем ялсенче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕççыннисене коммунистла воспитани памалла, ялти культурăллă-массăллă ĕçсене туса пымалла, вĕсен тĕрлĕрен кружоксен ĕçĕсене пуçарса, ертсе пымалла. Уйрăм вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем çакна тĕрĕс ăнланса илнĕ. Акă, Кăташри (Етĕрне р.) колхоз клубĕ кăтартуллăн ĕçлет. Клубрах стена хаçачĕ тухса тăрать. Вăл колхоз тата бригадăсемпе звеносем çуракине мĕнле хатĕрленсе пынине сарлакан çутатать.

Клуб çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем аван ĕçлеççĕ. Сăмахран, агротехника кружокĕнче 30 колхозник вĕренет. Вĕсем агротехникăна вĕреннине ĕçре пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Талуй ялсоветĕнчи вулав çурчĕ колхозниксемпе колхозницăсем валли час-часах калаçусемпе лекцисем иртерет. Палтайри, Чаканарти, Ту-Мучарти вулав çурчĕсем аван ĕçленине палăртмалла.

Районри хăшпĕр вулав çурчĕсемпе клубсем начар ĕçлеççĕ-ха. Ку ĕнтĕ вĕсем çине ялсоветсемпе комсомол организацисем çителĕксĕр çавăрăнса пăхнинчен килет.

М. Иванов.

* * *

Депутатсене ĕçе ытларах явăçтармалла

Октябрьский районра ялсовет исполкомĕсем иртнĕ çулталăка чылайĕшĕ ăнăçлăн вĕçлерĕç. Уйрăмăнах Хуракасси, Урхас Кушкă, Чăнкасси, Кив Тутайкасси ялсовечĕсенче депутатсем тăрăшса ĕçлерĕç. Хуракасси ялсовечĕ иртнĕ çулсенче чылай ĕçсем тăрăх кайра пынă, уйрăмăнах ялхуçалăх ĕçĕ юлса пынă. Мĕншĕн тесен, ялсовет ун чухне хăй тĕллĕн ĕçленĕ, актива ĕçе хутшăнтарман. Кăçал унти колхоз тырпулсене начар мар тата вăхăтра пухса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татрĕ. Укçа-тенкĕ пухас плана декабрĕн 21-мĕшне 103,6 процент тултарнă. Ку ĕçре пуринчен ытларах укçа-тенкĕ пухас енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ Патраков Денис тата Жукова Анна, Петров Федор хастаррăн ĕçлерĕç.

Урхас Кушкă ялсовет исполкомĕн председателĕ Тюменев юлташ ĕçе лайăх организациленипе кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх вĕçлерĕ, укçа-тенкĕ пухас ĕçе те декабрĕн 21-мĕшне 110 процент тултарчĕ, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлесе татрĕ. Ку ĕçре Архипова Анна, Миронов Кузьма, Тихонов Яким, Григорьев Василий депутатсем лайăх хутшăнса ĕçлерĕç

Чăнкасси ялсовечĕн исполкомĕ ĕçе лайăх организациленипе кăçал чăнкассем тырпулсене 5 кун хушшинче уйăран пуçтарса кĕчĕç, государство умĕнчи парăма вăхăтра тӳлесе татрĕç. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Максимов юлташ депутатсене кашнинех уйрăм порученисем парать тата вĕсене пулăшать.

М. Луганова депутат 9-мĕш округра, вăл ялхуçалăх комисси членĕ, хăйĕн округĕнче кулленех суйлавçăсем хушшинче хаçат-журналсем вуласа парать, унăн округĕнче государство умĕнчи парăмсене 100 проценчĕпех парса татнă.

Петр Истомин депутат бригадир-овощевод пулса ĕçлет, вăл кăçал Калинин ячĕпе тăракан колхозра пысăк тырпул туса илчĕ. 4 гектар çĕр çинче 120 тонна купăста, 1,75 гектар çинче 30 тонна помидор туса илнĕ. 3 пин тенкĕ яхăн арбуз туса сутнă. 3 гектар çинче 65 тонна хăяр тунă.

Анчах та ĕçсем пур çĕрте те мар лайăх пыраççĕ. Хăшпĕр ялсовет исполкомĕсем хăйсен ĕçне лайăх организацилеймен. Энтри-Пасар ялсовечĕ депутатсене кирлĕ таран ĕçе явăçтарайман. Çавăнпа та унта государство умĕнчи парăмсене паянхи куна çитсе те парса татман, çĕрулми обязательствине 6 процент анчах тултарнă, укçа-тенкĕ пухас плана 60 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Ялсовет хăйĕн ĕçне актива хутшăнтарман пирки пур ĕçре те кайра пырать, тырпула та кăçал начар, гектартан, вăтам шутпа, 5 центнер çеç пухса илнĕ. Кунта 1941 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешмеççĕ, тислĕк, кĕл тата минераллă удобренисем хатĕрлес плана пĕр процент та тултарман-ха.

Ялсовет исполкомĕсем депутатсем тата яланлăх комиссисем урлă пысăк ĕçсем тума пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсемпе куллен таччăн çыхăнса ĕçлени, вĕсене конкретлă пулăшу парса пыни кирлĕ, депутатсене хăйсен округĕнче ĕçлеме порученисем памалла, хушнă ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăмалла.

П. Сергеева.

Октябрьский район Совет исполкомĕн кадрсен пайĕн заведующийĕ.

КИНО

„ЯКОВ СВЕРДЛОВ“

Историллĕ-биографиллĕ çĕнĕ фильм

Совет ĕççыннисем çак чаплă та аслă ята, Яков Михайлович Свердлов ятне, унăн сăн-сăпатне, вăл революцишĕн тунă чаплă ĕçсене ĕмĕр асра тытса тăрĕç, унăн çутă пурнăçĕпе хастарлă ĕçĕсем этемлĕх историнче Ленин тата Сталин ячĕсемпе пĕр ретре тăрĕç.

Свердлов—Ленинпа Сталинăн соратникĕ, халăх массисен талантлă организаторĕ, çулпуçĕ. Вăл пĕтĕм хăйĕн кунçулне революциллĕ ĕçе панă, революци ĕçне, большевикла парти ĕçне вĕçĕмсĕр пăхăнса тăнă.

Владимир Ильич Ленин 1919 çулта ВЦИК заседанинче Свердлова асăнса çапла каланă:

«Истори тахçанах çакна кăтартса панă: аслă революцисем, хăйсен кĕрешĕвĕ пынă вăхăтра, аслă çынсене кăларса тăрататççĕ, ĕлĕк пулма та пултарайман пек туйăнакан талантсене сарса яраççĕ. Нелегальнăй кружок шкулĕнче тата подпольнăй ĕçре пусмăр айĕнче ĕçленĕ пĕчĕк парти шкулĕнче тата Турухан тĕрминче çавăн пек калама çук пысăк авторитет илнĕ».

Çавăн пек хакланă Свердлова Владимир Ильич Ленин, çавăн пек хаклать ăна совет халăхĕ.

Яков Михайлович Свердлов! Пĕтĕм совет ĕççыннисемшĕн çывăх та хаклă ят! Ăна илтсен чи малтанах Сталин юлташ сăмахĕсем аса килеççĕ: «Эпир, коммунистсем, — уйрăм тĕслĕ çынсем. Пире урăхла майлă материалтан тунă». Çак сăмахсем чи малтанах Яков Михайлович Свердлов сăн-питне кăтартса параççĕ. Свердлов чи малтанах—коммунист, уйрăм тĕслĕ çын, ăрасна материалран тунă çын. Фильмра Свердлова çавăн пек кăтартса панă та ĕнтĕ.

Пролетариллĕ революцин хурçă рыцарĕ — Яков Михайлович Свердлов хĕрӳллĕ революциллĕ ĕçе вунçичĕ çула çитсенех хутшăнма пуçлать. Фильм çакăнтан пуçланса каять.

Экран çинче 1902 çул. Чулхулара ярмарка пырать. Яп-яка вăрăм юпа тăрать. Унăн вĕçне мăшăр атă çакнă. Çак атăна юпа тăрăх хăпарса илме тапăннăшăн хуçана полтинник тӳлес пулать. Çамрăк рабочий Трофимов юпа тăрăх хăпарса атăна аллипе тĕртĕнет, анчах ăна вĕçертсе илеймесĕрех каялла шуçса анать. Хуçа ăна атăна парасшăн мар:

«Тĕртĕнни вăл — факт мар-ха, вĕçертсе илнĕ пулсан, вара атăна илнĕ пулăттăн», тет вăл.

Пăхса тăракан çынсене сирсе, юпа патне пĕр çамрăк çын пырса тăрать. Полтинник тӳлесе вăл маттуррăн юпа тăрăх хăпарса кайса атăна илсе анать. Атăна Трофимова парса вăл çапла калать: «Санăн, эсĕ хăпарса тĕртĕнтĕн ăна», тет.

Çак çамрăк çын Свердлов пулнă. Çакăнтан пуçланса каять Свердловпа Трофимов хушшинчи туслăх. Каярахпа Трофимов Свердловăн шанчăклă помощникĕ пулать.

Свердлов вăрттăн революциллĕ ĕçре пытанса пурăнать. Ярмаркăра унăн пысăк ĕç пур. Апăр-тапăрпа сут тăвакан лавкара вăл вăрттăн ĕçлекен типографи валли пичетлемелли станок шыраса тупнă. Çак станока илме укçа тупма ăна Горький пулăшать.

1905 çул. Свердлов Уралра. Кунта ăна партин Центральный Комитечĕ янă. Революционер-боец сасси кунти рабочисене кĕрешĕве, алла хĕçпăшал тытма хĕрӳллĕн чĕнет.

1906 çул. Çамрăк революционер Свердлов патша жандармисенчен пытанса пурăнать. Унăн клички «Андрей». Екатеринбург. Полици унăн хыççăн сăнаса ун йĕрĕ çине ӳкет. Свердлов тĕрмере. Хĕрӳллĕ революциллĕ ĕçе вăл кунта та хастаррăн туса пырать Вăл тĕрме начальстви политикăллă ĕçсемпе ларакансене хĕсĕрленине, вĕсене асаплантарнине хирĕçлесе голодовка организацилет, предателе палăртать.

Акă Свердлов ссылкăра. Инçетри Çĕпĕр ссылки. Енисей юханшывĕ хĕрринче, вут патĕнче Сталинпа Свердлов тĕл пулаççĕ. Вĕсем çĕнĕ революци çинчен, пролетариат çĕнтересси çинчен ĕмĕтленсе калаçаççĕ, пĕрле Ленин патне çыру çыраççĕ. Сталин шухăша кайса грузинсен сăввине калать:

«Хурçăран пулас пулать çыннăн чĕри.
Вара йывăçран пулсан та юрать унăн кольчуги,
Мĕншĕн тесен вăл хăрамĕ вара çапăçура».

Свердловăн аслă чĕрине тапма Инçетри Турухан крайĕнче тăвăр. Вăл вут пек вĕресе тăракан революциллĕ ĕçе туртăнать. Пролетариллĕ революцин паттăрĕ ссылкăра ирĕксĕр ĕçсĕр ларнипе килĕшесшĕн мар.

«Вăрçă кĕçех пĕтмелле. Унпала пĕрле вырăс империализмĕ те пĕтĕ», тесе лăплантарать Свердлова Сталин юлташ. «Ан кулян Яков, кĕçех ак пирĕн çуркунне килĕ», тет.

Ленинла-Сталинла партин çулйĕрĕшĕн кĕрешес ĕçре, пролетари диктатурине çирĕплетессишĕн кĕрешес ĕçре Свердловăн калама çук пысăк организаторла пултарулăхĕ уйрăмăнах вăл ВЦИК председателĕ пулса ĕçленĕ тапхăрта палăрать.

Свердлов Конституци проектне тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Комисси членĕсене вăл: Конституци проектне тунă чухне паянхи кун мĕнле ыйтусем кăларса тăратнинчен тухмалла, тесе вĕрентет.

Яков Михайлович мĕн курнине, илтнине пĕтĕмпех витĕр асра тытса тăма пултарнă. Унăн ăс-тăнĕ ку тĕлĕшрен тĕлĕнмелле пулнă. Акă ун патне пĕр çамрăк ача кучĕнеçпе пынă. Свердлов на часах палласа илет. Ку Ленька. Унăн амăшĕ, Урал рабочин арăмĕ, революци мĕн патне илсе пыма пултарнине унчухне ăнланса илейменскер, тахçан ĕлĕк Свердлова, вĕри шывпа сапса пĕçертме тăнине Яков Михайлович часах астуса илет. Вăл хĕрарăм унчухне, хăй патĕнче пытанса пурăнакан Свердлов ун çемьишĕн хăрушлăх пулса тăнине кăна курнă. Халĕ ĕнтĕ вăл «Андрей» сăмахĕсем мĕнле тĕрĕс пулнине пĕтĕмпех ăнланса илнĕ.

Свердлов хăйĕн тăван хулинче — Чулхулара. Кунта нумайранпа предатель Миронов дезорганизациллĕ ĕçсем туса пурăннă. Губернири партконференцинче Свердлов çак вырăнсенчи власть «защитникне» тăрă шыв çине кăларать, революци тăшманĕсене палăртса парать, кунта чăн-чăн революциллĕ советла йĕрке тăвать.

Партин VIII съезчĕ умĕн Свердлов пĕтĕм хăйĕн хĕрӳллĕхĕпе съезда хатĕрленет. Анчах çак вăхăтра ăна чир ӳкерет. Виличчен темиçе сехет маларах Яков Михайлович патне Ленин пырса каять.

Свердловăн сунсăрланнă организмĕ чире тӳссе ирттереймест. Съезда пухăннă делегатсем тепĕр кунне «Правда» хаçат çинче Свердлов вилни çинчен вуласа пĕлеççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ çак калама çук чаплă фильмăн кĕске содержанийĕ. Фильм Свердлов çинчен В. И. Ленин каланă сăмахсемпе вĕçленет.

Фильма писатель-орденоносецсен Левин тата Павленко юлташсен сценарийĕ тăрăх тунă. Режиссер Юткевич. Паллăрах рольсенче: Ленин — РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Штраух, Сталин—артист Кобаладзе, Свердлов—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Любашевский.

«Правда» хаçат декабрĕн 4-мĕшĕнче: «пирĕн çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере миллионлă халăх ку фильма калама çук пысăк интереспа пăхĕ», тесе çырнă. Чăнахах та, фильма хумхантаракан, пысăк хастарлăхпа тунă. Фильма пăхнă чухне унта артистсем вылянине ĕненес те килмест. Фильмра кăтартакан кадрсенче Штраух, Кобаладзе, Любашевский артистсене мар, чăн-чăн Ленина, Сталина, Свердлова курнăн туйăнать.

Картинăра, паллах, Свердловăн пĕтĕм пурнăç çулне кăтартса паман, мĕншĕн тесен пĕр фильмра, вăл темĕн чухлĕ пысăк пулсан та, ăна кăтартса пама май çук. Авторсем Свердлов пурнăçĕнчи уйрăм паллăрах вырăнсене кăна кăтартса панă.

Унтан та ытла: картинăна—содержани енчен те, форми енчен те, художествăллă хакĕ енчен те, вылякансен пултарулăхĕ енчен те — совет кинематографин шедеврĕ тесе калама та юрать.

Фильмра революци мĕнле йывăрлăхсем витĕр çуралса тухнине, пирĕн аслă çулпуçсем Ленин, Сталин тата вĕсемпе пĕрле Свердлов, ĕмĕр тăрăшшĕпе, çине тăрса, кирпĕч çине кирпĕч хурса, пролетариллĕ революцин çуртне мĕнле тунине кăтартса панă.

«Пирĕн çынсем мĕншĕн кĕрешнине тата вĕсем пĕтĕм тĕнче историнче мĕнле паллă историллĕ çĕнтерӳсем тунине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем нумай юн юхтарни харама кайманнине, вăл хăйĕн результачĕсене панине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă...» тенĕ Сталин юлташ.

Революци хыççăнхи ăрусем ку картинăна пăхса, унтан хăйсем валли сахал мар уроксем илĕç. Вĕсем хăйсенче, Свердлов пек, йывăрлăхсем умĕнче хăрама пĕлмен, тăшмана чунтан курайман тата тăван çĕршыва, большевикла партине, аслă Сталина пĕтĕм чĕререн юратакан совет патриочĕсен пахалăхĕсене татах та çӳллĕ пусăма хăпартĕç.

П. ВАСИЛЬЕВ.

Суйлав кампанийĕ

Паян 496, 499, 506-мĕш номерлĕ суйлав округĕсем тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутатсем суйласси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ йышăннă Указ тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен составĕсенчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене депутатсем суйласси çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ йышăннă Указ пичетленсе тухать. Çак Указсем тăрăх, паянтан вара уйрăм округсенче депутатсем суйламалли кампани пуçланать.

СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутатсем суйламалли округсем кивĕ чикĕпех юлаççĕ. 496-мĕш номерлĕ Шупашкар (хула) суйлав округне—Шупашкар хули, Сĕнтĕр районĕ пĕтĕмпех, Ишлей тата Советский районĕсен пĕр пайĕ; 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округне—Вăрмар, Куславкка районĕсем пĕтĕмпех, Тăвай тата Октябрьский районĕсен пĕр пайĕ; 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округне Етĕрнепе Хĕрлĕ Чутай районĕсем пĕтĕмпех, Советский тата Элĕк районĕсен пĕр пайĕ кĕрет.

Çавăн пекех тата уйрăм округсем тăрăх, ĕççынни депутачĕсен район, хула тата ял Совечĕсене депутатсем суйламалла.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, пирĕн республикăри ĕççыннисем суйлав кампанийĕ çинчен кăларнă Указсене пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеç. Суйлавсем пулса иртекен округсенчи суйлавçăсем хăйсен организованноçне тата большевиксен парти тавра, пирĕн учитель тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут кăтартса парĕç.

СССР, Союзлă тата автономлă республикăсен Верховный Совечĕсен тата вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ чаплă çĕнтерӳсем турĕ. Çавăн пекех çав блок çирĕп пулнине Карело-Финн ССР, Украинăн тата Белоруссин хĕвеланăçĕсенчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕсем те лайăх кăтартса пачĕç. Плутократиллĕ буржуаллă влаçран хăтăлнă Эстони, Латви тата Литва халăхĕсем, Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче тăрса, СССР Верховный Советне депутатсем суйламалли кампанине нихăçанхи пек мар пысăк çĕкленӳпе иртерчĕç. Коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ кунта та чаплă çĕнтерӳ турĕ.

Пуян опытсем тата йĕркене кĕнĕ йăласем тăрăх, СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене депутатсем суйламалли уйрăм округсенчи суйлавсенче коммунистсем беспартийнăйсемпе пĕрле союз тăваççĕ. Çакă, коммунистсемпе беспартийнăйсен союзĕ, — суйлав кампанине тата суйлавсене ăнăçлăн иртермелли пысăк вăй пулса тăрать.

Пулас суйлавсен уйрăмлăхĕ вăл — суйлав кампанийĕ, Суйлав Положенийĕ кăтартнă пек 2 уйăх малтан пуçланас вырăнне, пĕр уйăх кăна маларах пуçланни пулса тăрать. Çавăнпа та хальхи суйлав кампанийĕ парти организацисенчен тата вырăнти Советсенчен çак кампанине уйрăмăнах оперативлă ертсе пыма ыйтать.

Парти организацисен тата вырăнти Советсен умĕнче тăракан задача — иртнĕ суйлав кампанисен опычĕ тăрăх суйлав кампанине большевикла ертсе пырасси пулать, ĕç хăй тĕллĕн пуласса кĕтсе тăмалла мар, мĕншĕн тесен çĕнтерӳ нихăçан та хăй тĕллĕн килмест, ăна кĕрешсе илмелле. Çак ĕç опытлă тата сложнăй ĕç пулса тăнине хакламан çын, паллах, пысăк йăнăш тăвать. Парторганизацисемпе вырăнти Советсен çак суйлав кампанине Сталинла Конституцине пăхăнса, политикăллă пысăк хастарлăхпа иртерессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле.

Верховный Совет тата вырăнти Советсен депутачĕсене халăхăн чи лайăх, Ленин — Сталин ĕçне, социализмлă тăван çĕршыва тата хăйĕн халăхне парăннине, çавăн пекех массăпа çирĕп çыхăну тытнине ĕçре кăтартса панă представителĕсене суйламалла.

Советсене суйламалли депутатсен кандидатурине сӳтсе-явнă чухне суйлавçăсем депутата суйлама палăртнă кандидат совет законĕсене, государство умĕнчи хăйĕн обязанноçĕсене мĕнле пурнăçласа пынине, вăл стахановец пулнине, производствăра, учрежденире, колхозра пример кăтартса ĕçленине, совет учрежденийĕсенчи бюрократизмпа волокитăна хирĕç мĕнле кĕрешнине шута илеççĕ.

Парти тата комсомол организацисен, уйрăмăнах депутатсем суйламалли округсенче, иртнĕ суйлав кампанисен ĕç опычĕсене шута илсе агитаципе массăллă ĕçе тивĕçлипе пуçарса ямалла. Агитаторсене суйласа илмелле тата вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен агитаторсене кулленех пулăшса, ертсе пымалла. Лайăх йĕркеленĕ агитаципе массăллă ĕç суйлавçăсене депутатсем суйлама юрăхлă кандидатсем палăртма, суйлав кампанине чăрмантаракансене тата вĕсем хăйсен çыннисене Советсене кĕртме тăрăшнине хирĕç кĕрешме пулăшмалла. Сталин юлташ: «пирĕн агитациллĕ ĕç большевикла пулса пырсан, халăх вара хăйĕн верховнăй органĕсене тăшманла çынсене кĕртес çук. Апла пулсан, ĕçлес пулать, нăйкăшмалла мар, ĕçлес пулать, пурте административлă распоряженисен йĕркипе хатĕр пулса тăрасса кĕтсе лармалла мар», тесе каланине яланах асра тытмалла.

Ялсенчи политпросвет учрежденисен — вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсен, библиотекăсен, хĕрлĕ кĕтессен пысăк ĕçсем туса иртермелле. Вĕсен стена хаçачĕсем кăлармалла, вĕсен плакатсемпе лозунгсем пулмалла, докладсем иртермелле, хаçатсемпе журналсем çинче пичетленекен статьясене сасăпа вуласа парассине организацилемелле, Сталинла Конституцине, суйлав Законне ăнлантарса памалла т. ыт. те.

Районсенчи хаçатсем умĕнче те ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен хăйсен районĕсенчи суйлав округĕсенче суйлав кампани мĕнле иртсе пынине çутатса тăмалла, район тата хула Совечĕсен округсенчи, çавăн пекех участоксенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетнĕ решенисене тата вырăнти Советсене депутатсене суйлама кандидатсене регистрациленĕ даннăйсене пичетлемелле.

Пулас суйлав кампанин уйрăмлăхĕсене шута илсе, суйлавсем пулса иртекен округсенче суйлавçăсен списокĕсене тума, округсенчи тата участоксенчи суйлав комиссисене тума, суйлав участокĕсем валли çуртсем хатĕрлеме халех тытăнмалла. Суйлав ешчĕкĕсене, участоксенчи суйлав комиссисен пичечĕсене тата ытти оборудованисене тĕрĕслесе тухмалла.

* * *

СССР Верховный Советне тата ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен уйрăм округсенчи суйлав кампанийĕ историллĕ датăпа — Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине хатĕрленессипе пĕр вăхăтра килет. Халĕ Совет çĕршывĕнче XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăртун çĕнĕ хумĕ сарăлса пырать. Фабрикăсемпе заводсем, колхозсем тата вĕренӳ заведенийĕсем партконференцине производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Массăсен производствăллă çĕкленĕвĕ промышленноçăн отраçлисенче, çавăн пекех хамăр республикăри предприятисенче плансене тултарас тĕлĕшпе паха результатсем парать.

Нумай колхозсем агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене: уйра юр тытас, удобренисем, вăрлăхсем хатĕрлес ĕçе тата ытти ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем колхоза кирлĕ транспорт инвентарĕсене, лаша кӳлмелли хатĕрсене хатĕрлеççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса йĕркене кĕртеççĕ, фермăсенче ĕçлекенсем çамрăк выльăхсене пурне те пăхса çитĕнтерессишĕн ăмăртаççĕ т. ыт. те.

Вырăнти Советсен суйлав кампанийĕ массăсен производствăллă çĕкленӳне вăйлатма, XVIII партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса пыма пулăшмалла.

Сталинла Конституцине, суйлав Законне тата кулленхи ыйтусене ăнлантарса парассине предприятисенчи, учрежденисенчи ĕçсене лайăхлатас, ĕç дисциплинине çирĕплетес, ытларах продукци туса кăларас тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас, фермăсем валли выльăхсем туянса çитерес, çуракине кăтартуллăн хатĕрленес тата ĕççыннисен культурипе политикăллă шайне малалла та хăпартса пырас ĕçсемпе çыхăнтарса пымалла. Хальхи вăхăтра партиллĕ-политикăллă ĕçе асăннă задачăсемпе çыхăнтарса, пĕрпĕринчен уйăрмасăр туса пымалла.

Т. АХАЗОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

213 çĕнӳ панă

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Древкомбинатри рабочисемпе инженерно-технически работниксем иртнĕ çулта производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе пĕтĕмпе 213 çĕнӳ панă. Вĕсенчен чылайĕшне пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ, халĕ производствăра усă кураççĕ.

Пурнăçа кĕртнисем (пĕтĕмпе 80 çĕнӳ) вăтамран шутласан çулталăкне 92.554 тенкĕ перекетлеме май параççĕ. Уншăн авторсене 11 пин тенкĕ ытлă преми панă.

Хар. Лисин.

Тӑрӑшни хӑйӗн результачӗсене парать

Тӑрӑшни харама каймарӗ: 1940 ҫулта Калининский район гектартан вӑтам шутпа 14,9 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Чӑрӑш Шӗнерти «Красноармеец» колхоз 17,79 центнер, Шуркассинчи «Социализм» колхоз 17,4 центнер тӗштырӑ туса илнӗ, вӗсем районра пӗрремӗш вырӑна тухрӗҫ. Ҫавнашкалах районта гектартан 100 пӑт тырӑ туса илнӗ колхозсем чылай. Тури Карачурари «Путь Ленина» колхоз ӗҫкунӗ пуҫне 7 килограмм, Туҫи Мӑратри «Клевер» колхоз 6 килограмм, Аҫӑмҫырмари, Уйкас Явӑшри, Юманайри колхозсем 5-шер килограмм тӗштырӑ валеҫеҫҫӗ. Унпа пӗрлех колхозниксем хӑйсен ӗҫкунӗсем ҫинче чылай укҫа илеҫҫӗ: Кӳлхӗрринчи «Трактор» колхозра ӗҫкунӗ пуҫне 1 тенкӗ, Тури Кӑканарти «Правда» колхозра 80 пус, Ҫавалкассинчи «Ҫутталла» колхозра 65 пус валеҫӗнет.

Ҫак пысӑк тупӑш колхозниксене татах та ытларах тӑрӑшса ӗҫлеме хавхалантарать. Вӗсем вӑрлӑхсем сортлаҫҫӗ, тислӗк пухаҫҫӗ, юр тытаҫҫӗ т. ыт. те. Юманайри «Коминтерн», Иккӗмӗш Ялдрари Чапаев ячӗпе тӑракан, Чӑрӑш Шӗнерти «Красноармеец», Кушар Юнтапари Каганович ячӗпе тӑракан колхозсем вӑрлӑхсене сортласа пӗтернӗ, хӗллехи агротехникӑллӑ мероприятисен планӗсене тултарса ҫитересси те инҫе мар. Колхозниксем вӑл агромероприятисене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ тума тӑрӑшаҫҫӗ. Вӑл ӗҫсене вӗсем партин XVIII конференцине хатӗрленес тата ӑна ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илес ыйтусемпе ҫыхӑнтарса туса пыраҫҫӗ.

Пӗрер тӗслӗх. Алгазинри «Чӑваш Коммуни» колхозра партин XVIII конференцийӗ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва анлӑн сарса янӑ. Кашни колхозник ҫуракине хатӗрленес ӗҫсене тунӑ ҫӗре явӑҫтарнӑ. Колхозра стахановла шкул ӗҫлет. Ку вӑхӑта вӑл шкулта ҫичӗ заняти ирттернӗ. Ку занятисенче колхозниксем хӑйсене интереслентерекен ыйтусене кӑларса тӑратаҫҫӗ, вӗсене практикӑра туса пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Стахановла шкулӑн юлашки занятийӗнче ҫӗре ҫемҫетмелли япаласем ҫинчен калаҫу ирттернӗ. Ана практикӑра туса пӑхас тесе, тепӗр кунне стахановла шкулта вӗренекенсем тислӗк тӑкма, кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухма тухса каяҫҫӗ. Ҫапла майпа «Чӑваш Коммуни» колхоз хальхи вӑхӑта 588 лав юшкӑн турттарнӑ, 5 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 51 центнер кӗл пухнӑ. План тӑрӑх ку колхозӑн 1500 лав тислӗк хатӗрлемелле, вӑл 1680 лав хатӗрленӗ, 234 гектар ҫинче юр тытнӑ, 2 сеялка, 50 плуг юсанӑ. Малти Кӑкшӑмри «Красный кавалерист» колхоз 574 лав тислӗк хатӗрленӗ, 36 центнер кӗл пухнӑ, 107 гектар ҫинче юр тытнӑ.

Кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илесси ҫуракине мӗнле хатӗрленсе пынинчен килет. Апла пулин те районри хӑшпӗр колхозсем ҫуракине начар хатӗрленеҫҫӗ, ҫапла майпа вӗсем района каялла турттаҫҫӗ.

Район вӑрлӑхсем сортлас плана 54 процент кӑна тултарнӑ. Ҫавнашкалах тислӗк пухса хурас плана та вӑраххӑн тултарса пыраҫҫӗ, юр тытасси те хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне йышӑнаймасть. Планпа районӗпе 7883 гектар ҫинче юр тытас вырӑнне халӗ пӗтӗмпе те 2661 гектар ҫинче кӑна тытнӑ. Кӑмпӑлти «Броневик», Мачамӑшри «1-ое Мая», Хӑмӑшри Папанин ячӗпе тӑракан колхозсенче, ытах юр тытман тесе каласран, кӑшт-кашт тухса пӗчӗк юр тӗмисем купала-купала кайнӑ. Мӑн Явӑшри Ленин ячӗпе тӑракан колхозра, юр ҫил вӗҫтерсе ан кайтӑр, хытса лартӑр тесе кӗреҫесемсӗр 30-40 ҫын тухса урапа таптаса тухнӑ. Тепрер сехетрен ҫав колхозниксем колхоз правленине пырса, «40 гектар ҫинче юр тытрӑмӑр», тесе пӗлтернӗ. Ҫакӑн пек хӑтланни, паллах, агротехникӑллӑ мероприятисене пӑсни пулать. Апла эпир хамӑра хамӑр тата государствӑна улталатпӑр.

Ҫуракине хатӗрленесси куллен туса пымалли ӗҫ. Халӗ эпир ӑна ӑнӑҫлӑн туса пыратпӑр пулсан, вӑл, пӗлтӗрхи пек, хӑйӗн результачӗсене парасси куҫ умӗнчех.

(«Чӑваш Коммуни» корр.).

Пушартан сыхланмаҫҫӗ

Обществӑллӑ пурлӑха тата уйрӑм ҫынсен пурлӑхне пушартан сыхласси политикӑллӑ пысӑк ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе кирлӗ пек лайӑх организацилес тесен, пушара хирӗҫ кӗрешмелли мероприятисене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыни кирлӗ.

Сӗнтӗр районӗнче пушартан сыхланас ӗҫе лайӑх туса пыракан ирӗклӗ дружинӑсем сахалах мар.

Калайкас ялсоветӗнче пушар дружинисене 4 ҫул хушши ӗнтӗ М. Таймасов коммунист ертсе пырать. Таймасов юлташ яланах планпа ӗҫлет. Вӑл колхозсенче, шкулта, уйрӑм ҫынсен хуҫалӑхӗсенче пушарпа кӗрешмелли мероприятисене яланах массӑллӑ ӑнлантару ӗҫӗ урлӑ туса пырать. Инкек-синкек пулсан пулӑшу пама унӑн депора насоссем, лашасем яланах хатӗр тӑраҫҫӗ. Вӑл ӗҫлекен ялсоветӗнче 1940 ҫулта пӗр пушар та пулман.

Пушкӑртри «Ҫӗнӗ ҫул» колхозри дружина та лайӑх ӗҫлекен дружинӑсен шутне кӗрет. Унта ӗҫлекен ирӗклӗ пушар дружинин начальникӗ Ильгунов юлташ та хӑйӗн ӗҫне лайӑх организациленӗ. Вӑл колхоз тата колхозниксем, единоличниксем пушартан сыхланас енӗпе ирттермелли мероприятисене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслесех пырать, ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерме пулӑшать.

Ҫав вӑхӑтрах пушартан сыхланас енӗпе начар ӗҫлекен колхозсемпе ялсоветсем те нумай-ха. Юманлӑх ялсоветӗнчи «Аврора» колхозра (председателӗ Степанов), Мӑн Сӗнтӗр ялсоветӗнчи «Парижская Коммуна» колхозра обществӑллӑ пурлӑха сыхлас ӗҫе ытла та япӑх организациленӗ. Ку колхозсенче тырӑ склачӗсене сыхлама хуралҫӑсене тӗрӗс суйласа илмен. «Аврора» колхозра ҫул ҫитмен ҫамрӑк ачана «хурала» тӑратнӑ. «Парижская Коммуна» колхозӑн склачӗсем патӗнче хурал мӗнле тӑнине 2 хутчен тӗрӗслесен те хуралҫӑсене хӑйсен вырӑнӗнче тупайман. Хуралта тӑракан Колесникова тата Михайлова колхозницӑсем пӗрмаях конюхсем пурӑннӑ ҫуртра ҫывӑрса пурӑннӑ. Ильинка ялсоветӗнчи «Краснофлотец» колхозра (председателӗ Смирнов) тырӑ склачӗсене хураллама 67 ҫулхи ватӑ старике тӑратнӑ.

Юманлӑх, Ильинка, Шашкар, Шатракас ялсовечӗсенчи колхозсен руководителӗсем декабрӗн 15-мӗшчен те пушар насосӗсене урапа ҫинчех лартнӑ. Шашкар ялсоветӗнчи Каганович ячӗпе тӑракан колхоз председателӗнчен Камисеев юлташран «мӗншӗн сирӗн насоссем урапа ҫинчех», — тесе ыйтсан, вӑл «районран кӑтарту пулман» тесе ответлерӗ.

Районра ялсоветсем 25, вӗсенчен саккӑршӗнче ирӗклӗ пушар дружинин начальникӗсем ҫук. Ялсоветсем ҫумӗнчи ирӗклӗ пушар дружинин начальникӗсем кашни ялсоветрах пулмалла. Унта ӗҫлекен ҫынсене куллен кун улӑштарса тӑмалла мар.

Пушара хирӗҫ кӗрешесси сезонлӑ ӗҫ мар, куллен тумалли ӗҫ. Районри пур организацисен те пушарпа кӗрешес ӗҫе лайӑх организацилемелле.

М. ИСАЕВ.

Вӗсене мӗн тӗлӗнтерет?

Хӑшпӗр чух ҫакӑн пек пулать: вӑрман хатӗрлевӗ мӗн иккенне пӗлмен ҫынсем тӗлне килсе тухатӑн. Пӗрре ҫапла Калининский район Совечӗн исполкомӗнче ҫакнашкал калаҫу пулса иртрӗ:

— Районра вӑрман хатӗрлевӗ мӗнле пырать? — ыйтрӑмӑр эпир.

— Мӗнле вӑрман хатӗрлевӗ? — тӗлӗнсе тӑчӗҫ ун чухне райсовет исполкомӗн председателӗ А. Ивановпа райсовет исполкомӗн секретарӗ П. Сергеева юлташсем.

Вӑрман хатӗрлевӗпе интересленмен ӑна ертсе пырассинчен аякра тӑракан ҫынсене тӗлӗнтерет ӗнтӗ вӑл, анчах унтан пӗртте тӗлӗнме кирлӗ мар. Вӑрмана вӑхӑтра хатӗрлетӗн, — ҫӗнӗ строительствӑсем ӑнӑҫлӑн пыраҫҫӗ, тӑван ҫӗршыв оборони тӗрекленет. Ҫаксене чухламан ҫынсем вӑрман хатӗрлевне ертсе пымаҫҫӗ, ӑна организацилемеҫҫӗ.

Район вӑрман хатӗрлевне ытла та начар хутшӑнса ӗҫлет. Колхозсем вӑрманта ӗҫлеме ҫынсем, лашасем уйӑрса памасӑр тӑраҫҫӗ. Вӗсемшӗн хӑшпӗр чухне «ҫил-тӑвӑл тухать», «ҫанталӑк сивӗ» е тата «ҫул пулмасть». Район ҫӗршыв валли темиҫе ҫӗршер фестметр вӑрман хатӗрлесе памасть, кайра сӗтӗрӗнсе пырать.

Вӑрман хатӗрлес ӗҫе ертсе пыма райплан председателӗ В. Быков ҫине ответлӑх хунӑ. Уншӑн пулсан вӑрман хатӗрлевӗ «хата с краю». Унта вӑрман хатӗрлевӗ ҫинчен сӑмах тапратсан, вӑл хӑшпӗр кирлӗ сведенисене ВКП(б) райкомӗнчен кайса ыйтма сӗнет. Тӗрӗссипе вӑл цифрӑсем парти райкомӗнче те ҫук. Мӗншӗн тесен, ВКП(б) райкомӗ те, район совечӗн исполкомӗ пекех, вӑрман хатӗрлес ыйтупа сахал интересленет.

Район центрӗнче час-часах тӗрлӗрен канашлусем, пухусем тата ларусем пулаҫҫӗ. Мӗн-мӗн ҫинчен калаҫмаҫҫӗ пулӗ вӗсем ҫак канашлусенче тата пухусенче! Вӑрман хатӗрлевӗ ҫинчен ҫӑвара шыв сыпнӑ чухнехи пек, нимӗн ӑсӑнмасӑр иртсе каяҫҫӗ. Вӑл, тен, ҫакӑнтан килет: вӗсен шучӗпе халӗ вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе кампани пуҫланма вӑхӑт ҫитмен пулмалла. Апла пулсан кӗтсех тӑр: ҫанталӑк ҫуркунне енне сулӑнсан, ҫуна ҫулӗсем пӗтес чухне, вӑрман хатӗрлес ыйтупа районран ялсене вӗҫӗмсӗр уполномоченнайсем кайма тытӑнаҫҫӗ. Чылай ӗҫсене кампанилле туса пыни Калининский район историйӗнче халӗ тин мар, малашне те ҫавнашкалах пулса пырасси куҫ умӗнчех тӑрать.

Юлашки вӑхӑтра район Совечӗн исполкомӗнче: «Вӑрман хатӗрлевӗ мӗнле пынине пӗлме Вӑрнар вӑрманпромхозӗ сводкӑсем тӑратманни кансӗрлет», тесе калаҫма тытӑнчӗҫ. Ӑна илтсен пирӗн ҫакна калас килсе кайрӗ: Вӑрнар вӑрманпромхозне, тен, сводкӑсем тӑратма вӑрманта ӗҫлекен ҫынсем ҫукки кансӗрлет. Каламасӑрах паллӑ, пушӑ сводкӑран, ӑна темӗнле майлӑ ҫаваркаласа пӑхкаласан та, план тулма пултараймасть. Вӑрманта ӗҫлеме ҫынсем кирлӗ. Хальхи вӑхӑтра Тувалькино, Малти Кӑкшӑм, Тушкасси, Анат Карачура, Кӑкшӑм ялӗсенчи колхозсем вӑрманта ӗҫлеме пачах пӑрахнӑ. Ҫапла майпа Калининский район вӑрман касса хатӗрлес кӗркуннепе хӗллехи сезон планне январӗн 10-мӗш тӗлне 10,1 процент, автопарк патне турттарса кӑларассине 13 процент кӑна тултарнӑ. Ку цифрӑсенчен, Ивановпа Сергеева пек, нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук. Вӗсем йӑлтах вӑрман хатӗрлевӗ енӗпе кирлӗ пек ӗҫлеменнине кӑтартса параҫҫӗ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗ

ТАВАЙ. Нумаях пулмасть ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу 1940 ҫулти ӗҫсен итогне тата кӑҫалхи ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе тӑракан задачӑсене сӳтсе яврӗ.

Районри чылай колхозсем тырпул тухӑҫне ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Районӗпе илсен пӗр колхозра, 4 бригадӑра тата 3 звенора кашни гектартан 100 пӑт ытла тӗштырӑ туса илнӗ. Ленин ячӗпе тӑракан колхозри Г. Антонов юлташ ертсе пыракан бригада, 42 гектар ҫинче, вӑтам шутпа кашни гектартан 21 центнер, звеньевая М. Павлова хӑй ҫумне ҫирӗплетнӗ участок ҫинчен кашни гектартан 27-шер центнер тӗштырӑ пухса илнӗ т. ыт. те. Колхоз ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе пырать. План тӑрӑх 800 лав торф кӑлармалла пулсан, 2.550 лав турттарса кӑларнӑ. Уя юр тытас, кӗл пухас плансене те ытлашшипех тултарнӑ. Колхозниксем (140 ҫын) агрокружокра, бригадирсемпе уйрӑм стахановецсем стахановла шкулта вӗренеҫҫӗ.

«Красная Чувашия» колхоз иртнӗ ҫулта кашни гектартан вӑтам шутпа 11-шер центнер ытла тӗштырӑ пухса илнӗ. Ку колхоз пахча-ҫимӗҫ тӑвас енӗпе паха тӗслӗхсем кӑтартать. 1940 ҫулта гектар пуҫне 500 центнер ытла купӑста туса илнӗ. Пахча-ҫимӗҫ бригадин бригадирӗ Т. Васильев Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ. Колхоз пахча-ҫимӗҫсенчен кашни ҫулах пысӑк тупӑш илет. Иртнӗ ҫулта пахча-ҫимӗҫ сутса 60 пин тенкӗ тупӑш илнӗ. Ҫавӑн пекех Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 50 пин тенкӗлӗх, Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз 53 пин тенкӗлӗх, «Социализм» колхоз 30 пин тенкӗлӗх ытла пахча-ҫимӗҫ сутнӑ. Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра ӗҫкунӗ пуҫне 4-шар килограмм тӗштырӑ, пӗрер тенкӗ укҫа тата пахча-ҫимӗҫ нумай валеҫеҫҫӗ.

Канашлу чылай колхозсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӳсӗм тунине палӑртрӗ. Районри 15 колхозра 5-шер ферма, 15 колхозра 1-шар ферма, 2 колхозра 6-шар ферма, Енших-Нӑрвашри «Красная Чувашия» колхозра 7 ферма организациленӗ. Район государство выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе панӑ плана лашасем енӗпе 102 процент, мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем енӗпе 104 процент, сыснасем енӗпе 120 процент тултарнӑ. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлекенсем сахал мар. Ельпуҫӗнчи «КИМ» колхозри сурӑх ферминче ӗҫлекен Г. Моисеев юлташ пӗр ҫулталӑк хушшинче 37 сурӑхран 38 путек пӑхса ӳстернӗ. Ӗне ферминче ӗҫлекен доярка А. Елкина 14 ӗнерен 14 пӑру пӑхса илнӗ. Ҫӗнӗ Ҫырмари Молотов ячӗпе тӑракан колхозри сурӑх ферминче ӗҫлекен А. Дмитриев 16 сурӑхран 26 путек пӑхса ӳстернӗ. Ҫак шутран 10 сурӑх икшер хут пӑранланӑ.

Анчах та выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе пур колхозсенче те мар кирлӗ пек ӗҫлеҫҫӗ-ха. «Пионер» колхозра иртнӗ ҫулта 21 кӗсререн 5 тиха ҫеҫ пӑхса ӳстернӗ. Вӗсем те лайӑх пӑхманнине пула вилнӗ. Ямбулатоварри «Красная Армия» колхозра 57 кӗсререн 2 тиха ҫеҫ пӑхса ӳстернӗ. «Красное Сормово» колхозра фермӑри сыснасене сивӗ лупас айӗнче усраҫҫӗ. Ҫамрӑк пӑрусем валли те ӑшӑ ҫурт-йӗр хатӗрлемен. Ҫапла вара ку колхоз выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма ҫителӗксӗр хатӗрленнӗ.

Район ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлемест-ха. МТ Станцийӗн пурӗ 47 трактор юсамалла пулсан, 8 трактор ҫеҫ юсанӑ. Районӗпе илсен вӑрлӑх сортламалли плана 29 процент, уя тислӗк кӑлармалли плана 12 процент, юр тытмалли плана 24 процент анчах тултарнӑ. Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе уйрӑмах «Коммунар», «Горьковская коммуна», «25 Октября» колхозсем юлса пыраҫҫӗ.

Канашлу ҫуракине тӗплӗн хатӗрлеме, кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен те вӑйлӑ тырпул туса илме обязательствӑсем илчӗ. 1941 ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн ирттерессишӗн Вӑрмар районӗпе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗ.

М. РАЗНОМАЗОВ.

Ҫамрӑк выльӑхсене лайӑх пӑхса ӳстермелле

КАЛИНИНО. Кӳлхӗрринчи «Трактор» колхоз 1940 ҫулти ҫамрӑк выльӑхсене пурне те лайӑх пӑхса ӳстернӗ. Ку колхоз кӑҫал та ҫамрӑк выльӑхсене йышӑнма лайӑх хатӗрленнӗ. Пӑрусене валли ӑшӑ пӳлӗмсем 18 пур. Путексем валли те, сысна ҫурисем валли те ӑшӑ ҫурт-йӗрсем ҫителӗклӗ. Ҫавӑн пекех Туҫи Мӑратри «Клевер», Ҫавалкасри «Ҫутталла» тата Мичурин ячӗпе тӑракан колхозсем те обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах та обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата уйрӑмӑнах ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе пур колхозсем те мар ҫителӗклӗ ӗҫлеҫҫӗ-ха. Иккӗмӗш Ялдрари Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра ҫамрӑк выльӑхсене тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илмен. Ҫакна пула фермӑра сысна ҫурисем 18 пуҫ шӑнса вилнӗ.

Кун пек тӗслӗхсем районра татах та пур. Анчах та районри организацисем ҫак пысӑк ҫитменлӗхе хирӗҫ кӗрешмеҫҫӗ.

Т. ШЕЛЛИ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре малта пыракансем

Куславкка районӗнчи сурӑх фермисем 1940 ҫулти плана 108,9 процент тултарнӑ. Ҫавӑн пекех Сӗнтӗрвӑрри районӗнче те сурӑхсен йышне ӳстермелли плана 107,8 процент тултарнӑ.

Чӑваш республикинче сурӑхсем ӗрчетмелли плана ултӑ районри колхозсем ытлашшипех тултарнӑ.

Тислӗк хатӗрлеҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Ҫуракине хатӗрленнӗ май районри чылай колхозсем минераллӑ тата вырӑнти ытти удобренисене нумайрах хатӗрлессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Питикассинчи «Агроном» колхозри конюхсемпе ферма работникӗсем куллен 14-шар лав тислӗк хатӗрлеме обязательство илнӗ. Вӗсем тислӗк нумайрах пухас тесе выльӑхсем айне торф тӑкса параҫҫӗ. Ку колхоз районра малта пыракан «Большевик» колхозпа ӑмӑртӑва тухрӗ. Колхозниксем 300 лав юшкӑн, 30 лав фекали, 30 центнер кӗл хатӗрлеме пулчӗҫ.

Свердлов ячӗпе тӑракан колхоз пӗчӗк колхоз пулин те, 2,5 тонна минераллӑ удобрени кӳрсе килчӗ, 950 лав юшкӑн хатӗрлерӗ. «Красный пахарь» колхоз кашни хуҫалӑх пуҫне ҫур тонна минераллӑ удобрени, «Осоавиахим» колхоз 20 тонна сульфат-аммоний кӳрсе килнӗ.

С. Г.

Районри чи лайӑх финагент

ИШЛЕЙ. 1940 ҫулта финанс работникӗсене ҫакӑ тӗлӗнтерчӗ. Кашни кварталтах, квартал вӗҫленнӗ май укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени ҫинчен итогсене тунӑ хыҫҫӑн, Мишер ялсоветӗнче налог агенчӗ пулса ӗҫлекен М. Т. Ходяшов юлташ ятне асӑнма тивнӗ. Пӗрремӗш кварталта ӑна квартал планне 103 процент тултарнӑшӑн 100 тенкӗ укҫа парса премиленӗ.

М. Ходяшов II—III-мӗш кварталсенче те хӗрӳллӗн ӗҫлерӗ. Иккӗмӗш квартал планне 125 процент, III-мӗш квартал планне 142 процент тултарчӗ. Кун хыҫҫӑн вӑл сентябрь уйӑхӗнче канмалли ҫурта кайма путевка илчӗ. Хӑйӗн ӗҫне юратса тӑвакан, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен агент укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе ҫулталӑкри плана 133 процент тултарчӗ.

Районри финанс работникӗсен нумаях пулмасть пулса иртнӗ канашлӑвӗнче М. Ходяшов юлташ хӑйӗн ӗҫри опычӗсем ҫинчен, 1941 ҫулшӑн 2600 тенкӗ культсбор укҫи пухни ҫинчен каласа пачӗ. Вӑл ытти агентсене XVIII партконференци уҫӑлнӑ тӗле пӗрремӗш кварталти финанс планне 75 процентран кая мар тултарма ӑмӑртӑва чӗнчӗ.

С. ГОРЛАНОВ.

Суту-илӳ ӗҫӗнче культурлӑх пултӑр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Советлӑ суту-илӳ ҫулран-ҫулах вӑйланса пырать. Лавкасен, магазинсен, чайнӑйсен хисепӗ юлашки ҫулсенче чылай ӳсрӗ. Районра 5 сельпо, лавкасемпе магазинсем 37 шутланаҫҫӗ. Вӗсемсӗр пуҫне район центрӗнче 1 столовӑй, 1 чайнӑй тата чугунҫул разъездӗнче тепӗр чайнӑй ӗҫлет. Район центрӗнче икӗ магазин, икӗ лавка тата кӗнеке магазинӗ пур.

Юлашки вӑхӑтра суту-илӳ организацисем хӑйсен ӗҫне чылай лайӑхлатрӗҫ. Таварсем вӑхӑтра кӳрсе килеҫҫӗ. Анчах тунӑ ӗҫсене ҫителӗклӗ теме ҫук-ха. Уйрӑм лавкасемпе магазинсенчи работниксем паха тавара кирлӗ пек йӗркеллӗн сутма пӗлмеҫҫӗ. Сӑмахран, район центрӗнчи лавкасемпе магазинсенче ӗҫлекенсенех илер. Красноармейский сельповӗн кӗнеке магазинӗнче тӗрлӗ кӗнекесем 30 пин тенкӗлӗх пур. Кӗнекесене полкӑсем ҫине чипер хуман. Кам та пулин кӗнекесем илме пырсан, ӑна кирлӗ кӗнекесене аран-аран шыраса тупса параҫҫӗ. Питӗ паха ҫӗнӗ кӗнекесем тусанпа тата ҫӳпҫапсемпе вараланса пӗтнӗ.

Супар сельповӗн Чуллӑри лавкинче ҫуллахи тусансене халӗ те шӑлса тасатман. Хӑмӑт-ӗнерчӗксем тата тӑвар урайӗнче выртаҫҫӗ. Сельпон чугунҫул разъездӗнчи чайнӑйӗнче те тасалӑх ҫук. Буфетчик тата официантксем халатсем тӑхӑнмаҫҫӗ.

Столовӑйсемпе чайнӑйсенчи тасалӑха районри госсанинспекцин тӗрӗслесе тӑмалла. Тасалӑхшӑн кӗрешмелле унӑн. Госсанинспектор Алексеев юлташ столовӑйне иртнӗ ҫулта пӗр хут ҫеҫ пырса пӑхнӑ.

Районра лайӑх ӗҫлекен суту-илӳ работникӗсем сахал мар. Чадукассипе Яманакри магазинсенче таварсене культурӑллӑ сутма вӗреннӗ. Полкӑсем ҫинче йӗркеллӗн выртакан таварсем куҫа илӗртсе тӑраҫҫӗ. Кашни тавара уйрӑм отделсем тӑрӑх йӗркеллӗ хурса тухнӑ.

Магазинсенче, лавкасемпе ларексенче яланах йӗркеллӗх, тирпейлӗх тата тасалӑх пултӑр. Суту-илӳ ӗҫӗнчи кашни работникӗн ҫавӑншӑн кӗрешмелле.

П. Майоров.

Пурҫӑн хурчӗсене ӗрчетессине вӑйлатса пырар

Ялхуҫалӑхӗнче тӗштырӑ, выльӑх-чӗрлӗх отраҫлисене хӑпартса пынипе пӗрлех, ытти отраҫлӗсене те аталантарса пыни пысӑк тупӑш парать. Ҫак пысӑк тупӑш паракансенчен пӗри — пурҫӑн хуртне ӗрчетесси пулса тӑрать.

Пурҫӑн хуртне ӗрчетесси пирӗн колхозсенче 1936—37 ҫулсенче пуҫланса кайрӗ. 1936 ҫулта Пӗтӗм Союзӗпе пурҫӑн хуртне 220 колхозра ӗрчетнӗ, 106,6 центнер кокон пухса илнӗ, 1938 ҫулта — 660 колхозра 480 центнер, 1939 ҫулта 900 колхозра 1450 центнер кокон пухнӑ пулсан, 1940 ҫулта 1000 колхозра ытла пурҫӑн хуртне ӗрчетнӗ. Кокон туса илесси ҫулран ҫулах ӳссе пырать. Пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫе тӗплӗн вӗренсен унтан татах та пысӑкрах тупӑш илме пулать.

Хальхи вӑхӑтра пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫ кӑнтӑрти районсемсӗр пуҫне ҫурҫӗрти районсенче те—Горький облаҫӗнче, Тутар, Башкир республикисенче те анлӑн сарӑлса пырать.

Пирӗн республикӑра пурҫӑн хурчӗ ӗрчетес ӗҫе чи малтан Сӗнтӗр районӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхозри опытник С. Вазиковпа Октябрьский районри «Путь Ленина» колхозри опытник С. Алексеев юлташсем пуҫарса ячӗҫ. Вӗсем Мускавран пурҫӑн хурчӗн ҫӑмартисене (грены) кӳрсе килсе хуртсем ӗрчетсе кокон туса илнӗ. Ҫак коконсене Мускавра пурҫӑн промышленноҫӗн тӗпчев институтӗнче тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн вӗсен пахалӑхӗ, пурҫӑн хуртне ӗрчетекен кӑнтӑрти районсемпе танлаштарсан, кая юлманнине палӑртнӑ.

1938 ҫулта пурҫӑн хуртне ӗрчетес майпа Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ Башкиринчен 250 грамм хурт ҫӑмартисене — грены илсе килчӗ. Ӑна Октябрьский районри виҫӗ колхоза («Путь Ленина», «Боевик», тата «Первое Мая») ӗрчетме панӑ. Ҫак колхозсенче пуринче те пурҫӑн хурчӗн коконӗсене пухса илчӗҫ: «Боевик» колхоз 12 килограмм, «Первое Мая» — 7 килограмм, «Путь Ленина» колхоз — 22 килограмм кокон илнӗ. Алексеев юлташ ҫак 22 килограмм кокона государствӑна 1980 тенкӗлӗх панӑ.

1939 ҫулта опыт ӗҫне малалла чӑсас майпа пурҫӑн хурчӗн гренне 2 килограмм илсе килнӗ. Вӗсене колхозсене панӑ. Куславкка районӗнчи «Динамо» колхоз кокона государствӑна парса 5000 тенкӗлӗх, «Путь Ленина» колхоз 4000 тенкӗлӗх тупӑш илчӗҫ.

Ҫапла вара юман ҫулҫипе пурӑнакан пурҫӑн хуртне ӗрчетес тӗлӗшпе виҫӗ ҫул хушши туса ирттернӗ опытсем Чӑваш республикинчи ытти колхозсенче те пурҫӑн хурчӗ ӗрчетме пысӑк май пуррине кӑтартса пачӗҫ.

Иртнӗ ҫултан пуҫласа СССР пир авӑр промышленноҫӗн Наркомачӗ пурҫӑн хурчӗ ӗрчетсе коконсем хатӗрлеме колхозсем валли план ҫирӗплетнӗ. Пирӗн республикӑра 10 колхоз государствӑна пӗр тонна ытла кокон — 25 пин тенкӗлӗх панӑ.

Пирвайхи ҫул пурҫӑн хуртне колхозсенче икӗ хутчен — ҫуркунне май уйӑхӗнче тата ҫуллахи вӑхӑтра август уйӑхӗнче пуҫласа пӑхса усранӑ. Пурҫӑн хуртне иккӗмӗш хут ӗрчетме пирӗн республикӑра та май пуррине колхозсен опычӗ лайӑхах кӑтартса пачӗ. Анчах вӑл ӗҫе вӑхӑтра тытӑнмалла, хуртсене кӗркуннехи сивӗ вӑхӑтра тӑрантса усрама ҫуртсем хатӗрлемелле.

Пурҫӑн хуртне ӗрчетсе колхозсем пысӑк тупӑш илме пултараҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта Куславкка районӗнчи «Канаш» (бригадирӗ Жуковский), «Победа» (бригадирӗ Петров) колхозсем государствӑна коконсем тӑратмалли плана 180—196 процент тултарчӗҫ, Ҫӗрпӳ районӗнчи «Поженар» колхоз (бригадирӗ Варламов) ҫулталӑк планне 107 процент тултарса, 3000 тенкӗлӗх кокон панӑ. Ишлей районӗнчи Мамӑшри промартель государствӑна 4000 тенкӗлӗх, Октябрьский районри Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 3600 тенкӗлӗх кокон панӑ.

Пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫ ҫакӑн пек пулса пырать. Пурҫӑн лӗпӗшӗ пысӑк сарӑ-хӑмӑр тӗслӗ пулать. Лӗпӗш 10—12 кун хушши пурӑнать, вӑл пурӑннӑ вӑхӑтра апат ҫимест. Вара ҫӑмарта хурса хӑварнӑ хыҫҫӑн лӗпӗшсем вилсе пӗтереҫҫӗ. Пӗр ама лӗпӗш ҫуркуннехи вӑхӑтра 120—150, ҫуллахи вӑхӑтра 200—250 ҫӑмарта хурса хӑварать. Унӑн ҫӑмартисем йӳҫ кӑшман вӑрри евӗрлӗ, кӑвак-хӑмӑр тӗслӗ пулаҫҫӗ. Лӗпӗшсем хӑйсен ҫӑмартисене 6—8 кун хушшинче хурса пӗтереҫҫӗ, малтанхи 2—3 кун хушшинче ытларах хураҫҫӗ. Малтанхи кунсенче хунӑ ҫӑмартасем пысӑкрах тата пахалӑх тӗлӗшӗнчен авантарах пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та малтан хунӑ ҫӑмартасемпе ҫеҫ пурҫӑн хуртне кӑларнӑ ҫӗрте усӑ курмалла.

Лӗпӗш ҫӑмартисене хурса пӗтерсен 8—10 кунтан тин хуртсем тухма тытӑнаҫҫӗ. Вара ҫак ҫӑмартасенчен тухнӑ гусеницӑсем юман ҫулҫипе тӑранса пурӑнаҫҫӗ, юман ҫулҫи ҫук пулсан хурӑн ҫулҫине те ҫиме пултараҫҫӗ.

Ҫуркуннехи вӑхӑтра пурҫӑн хурчӗн гусеницисене кӑларма ҫӑмартасене юман ҫулҫи тухас умӗн 8—12 кун малтан хумалла. Гусеницӑсем тухнӑ вӑхӑтра ҫӑмартасем ҫурӑлнӑ сасӑ илтӗнет. Чи малтан тухнӑ гусеницӑсене «разведка» теҫҫӗ. Разведка тухнӑ хыҫҫӑн 1—2 кунран пур ҫӑмартасенчен те гусеницӑсем тухма тытӑнаҫҫӗ. Гусеницӑсем ирхине 4 сехетрен пуҫласа кӑнтӑрла 12 сехетчен тухаҫҫӗ, пуринчен те ытларах 7 сехетпе 10 сехет хушшинче тухаҫҫӗ. Лӗпӗш пӗр кунта хунӑ ҫӑмартасенчен 4—5 кунтан гусеницӑсем тухса пӗтеҫҫӗ.

Ҫӑмартасене уйрӑм хатӗрленӗ ҫуртсенче кӑлармалла. Ҫуртра ӑшӑ, ҫутӑ пулмалла тата таса сывлӑш тытса тӑмалла. 1000 грамм ҫӑмарта кӑларма 25 — 30 тӑваткӑл метр вырӑн кирлӗ. Ҫуртне тата ытти тытмалли япаласене ҫӑмартасенчен гусеницӑсем кӑларма хуриччен 15—20 кун малтан формалин шывӗпе дезинфекцилемелле. Шӗвекне 40 процентлӑ 1 литр формалина 9 литр шывпа хутӑштарса хатӗрлемелле. 25—30 тӑваткӑл метра дезинфекцилеме 2 литр формалин кирлӗ. Дезинфекци тӑвас умӗн ҫуртра ӑшӑ Цельсипе 18—24 градус пулмалла. Ҫӑмартасенчен гусеницӑсем кӑларма хурас умӗн 2—3 кун маларах ҫурта сӳнтермен извеҫпе шуратмалла.

Ҫӑмартасенчен гусеницӑсем кӑларма хунӑ вӑхӑта инкубаци теҫҫӗ. Инкубаци вӑхӑтӗнче ҫуртра ҫуркуннехи вӑхӑтра 20—23 градус, ҫуллахи вӑхӑтра 23—25 градус ӑшӑ пулмалла. Сывлӑш нӳрлӗхӗ ҫуркуннехи вӑхӑтра 65—75 процент, ҫуллахи вӑхӑтра 70—80 процент пулмалла. Сывлӑш нӳрлӗхне сӑнаса тӑма психометр кирлӗ, кирлӗ таран нӳрӗ тытса тӑма тутӑр татӑкӗсене йӗпетсе ҫакмалла.

Ҫӑмартасене хутран тунӑ коробкӑсем ӑшне хумалла. Коробкӑн пысӑкӗшӗ 100 грамм ҫӑмарта валли 25х50 сантиметр таран кирлӗ, тӗпне йывӑҫран е картонран хатӗрленӗ рамӑсем (15х40 сантиметр) хумалла, рамӑсен ҫӳллӗшӗ 0,5 сантиметр, коробкӑн пӗтӗм ҫӳллӗшӗ 3—4 сантиметр пулмалла. Тин ҫеҫ тухнӑ гусеницӑсем валли коробка хӗррине юман ҫулҫи хумалла.

Малтанхи вӑхӑтра ҫӑмартасем ҫине хӗвел ҫутти лектерме кирлӗ мар. Кашни кун тухнӑ гусеницӑсене уйрӑммӑн илсе пӑхса усрамалла. Гусеницӑсене малтанхи 4 кун хушшинче тухнисене ҫеҫ ҫитерсе ӳстермелле.

Тин ҫеҫ тухнӑ гусеницӑсем хура-хӑмӑр тӗслӗ пулаҫҫӗ. Вӗсен пуҫӗ хӗрлӗ пулать, пысӑкӗшӗ 5—8 миллиметр. Малтанхи вӑхӑтра гусеницӑсем вырӑнтан вырӑна куҫаҫҫӗ, ҫавӑнпа та аяккалла саланса каясран асӑрхамалла. Гусеницӑсене ҫамрӑк тата чӗрӗ ҫулҫӑсем хурса памалла, вара ҫав ҫулҫӑсем ҫине куҫсан ҫулҫипе пӗрле юман тураттисем ҫине куҫармалла.

Гусеницӑсене алӑпа тытма юрамасть. Саланса кайнӑ гусеницӑсене ҫулҫӑпа е хур тӗкӗпе шӑлса пухса илмелле. Гусеницӑсем 5 хутчен тирне улӑштараҫҫӗ, ӑна линька теҫҫӗ. Гусеницӑсем 4 — 8 кун иртсен пӗрремӗш хут тирне улӑштараҫҫӗ, вара иккӗмӗш тирӗ ӳсме тытӑнсан симӗс тӗслӗ пулаҫҫӗ. Гусеницӑсем тирне улӑштарнӑ вӑхӑтра ҫулҫӑ е турат ҫумне ҫирӗпленсе тапранмасӑр, ҫывӑрнӑ пек пулса лараҫҫӗ. Тирне улӑштарнӑ вӑхӑт 1,5—2 кун хушши чӑсӑлать. Иккӗмӗш ӳсӗм— 4—7 кун, виҫҫӗмӗш 5—9 кун, тӑваттӑмӗш 7—10 кун, пиллӗкмӗш 8—14 кун хушши пырать. Ҫуркуннехи вӑхӑтра гусеницӑсем 35—50 кун, ҫуллахи вӑхӑтра 50—65 кунтан ҫӑмхаланаҫҫӗ. Вӑл вӑхӑт гусеницӑсене мӗнле условинче пӑхса усранинчен килет.

Ҫуркуннехи вӑхӑтра малтанхи пӗрремӗшпе иккӗмӗш ӳсӗмри гусеницӑсене ҫуртра юман тураттисем ҫине лартса ҫитерсе усрамалла. Юман тураттисене юри хатӗрленӗ вӑлашкасем ещӗксем е чӳлмексем ҫине лартмалла, унта ӑна шывне икӗ кунта пӗрре улӑштарсах тӑмалла

Гусеницӑсем ҫинӗ юман ҫулҫисене ҫийӗнчех улӑштарса тӑмалла. Гусеницӑсем хӑйсен тирне хывнӑ вӑхӑтра ҫулҫӑсене улӑштарма юрамасть. 100 гусеницӑна тӑрантарса усрама 4-5 килограмм юман ҫулҫи кирлӗ.

Виҫҫӗмӗш ӳсӗмри гусеницӑсене вӑрмана илсе кайса юман йывӑҫҫи ҫине ярса е юри хатӗрленӗ площадкӑсенче ҫитерме пулать. Вӑрманта пӑхса усранӑ гусеницӑсем таса ӳсеҫҫӗ, вӗсенчен паха кокӑн пулать. Вӑрмана ярса ҫитерсен вӗсене пӑхма та ӗҫкунӗ сахал тухать. Гусеницӑсем вӑрманта ҫил вӗрнинчен, температура улшӑннинчен аптӑрамаҫҫӗ. Ытлашши хӗвел хӗртсе пӑхнӑ вӑхӑтра ҫулҫӑ айне, сулкӑна куҫаҫҫӗ.

Ҫуллахи вӑхӑтра иккӗмӗш хут ҫитернӗ чухне гусеницӑсене пӗрремӗш ӳсӗмрех вӑрмана куҫарма пулать. Гусеницӑсене кӑнтӑрлахи ӑшӑ Цельсипе 17 градусран, каҫхи ӑшӑ 10-12 градусран кая мар пулсан вӑрмана куҫарма пулать. Гусеницӑсене ҫуркуннехи вӑхӑтра вӑрмана ирхине 8 сехетчен, ҫуллахи вӑхӑтра иккӗмӗш выкормкӑра чухне 6 сехет иртсен каҫхине куҫармалла.

Вӑрмана ярса ҫитермелли юман йывӑҫҫисен ҫӳллӗшӗ 2,5—3 метр пулмалла. Тата площадкӑра ҫитерсе усрама касса илнӗ юман тураттисемпе те усӑ курма пулать.

Пирӗн Чӑваш республикинче юман вӑрмансем питӗ нумай. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк юманлӑхсемпе тӗрӗс усӑ курса пурҫӑн хурчӗсене ҫитерсен, эпир ку ӗҫе колхозсенче татах та ытларах сарса государствӑна кирлӗ кокон ҫителӗклӗ пама пултаратпӑр.

Тӑваттӑмӗш хут тирне хывнӑ хыҫҫӑн гусеницӑсем вара ҫӑмхаланма тытӑнаҫҫӗ. Вӗсем юман туратти ҫинче 2—3 ҫулҫӑ пӗрлештерсе йӑва ҫавӑраҫҫӗ, вара гусеница хӑйӗн ӑшӗнчен пурҫӑн ҫиппи кӑларса кокон тума тытӑнать. Кокон туса пӗтернӗ хыҫҫӑн 4—5 кунтан гусеница куколка пулать.

Ҫӑмхаланнӑ вӑхӑтра гусеницӑсене хускатма юрамасть. Гусеницӑсене юман ҫулҫисене касса илсе тӑрантарнӑ чухне кокон тунӑ вӑхӑтра ҫӑмхаланма ӗлкӗрейменнисене урӑх вырӑна куҫарса ҫӗнӗрен юман ҫулҫипе тӑрантармалла.

Ҫӑмхаланнӑ хыҫҫӑн, 6—7 кун иртсен коконсене ҫулҫисемпех касса илсе уйрӑммӑн пӗрер сийӗн полкӑсем (стелажи) ҫине хурса усрамалла. Пуҫтарнӑ коконсене купаласа хума юрамасть. Вара ҫӑмхаланнӑ хыҫҫӑн ҫуркуннехи вӑхӑтра 8—9 кун иртсен, кӗркуннехи вӑхӑтра 12—15 кун иртсен коконсене тураттисенчен тата ҫулҫӑсенчен уйӑрса сортласа хумалла.

Пухнӑ тата сортланӑ коконсене кокон илекен пунктсене париччен уйрӑм хатӗрленӗ вырӑнсенче е полкӑсенче пӗрер сийӗн сарса усрамалла. Пӗр тӑваткӑл метр вырӑнта 1000 кокон усрама пулать. Брак коконсене уйрӑм сыхламалла. Кокон усранӑ ҫуртра ӑшӑ Цельсипе 15 градусран мала пулмалла мар. Ҫапла туса хатӗрленӗ коконсемпе промышленноҫра пурҫӑн тунӑ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ.

Пирӗн республикӑра юман йывӑҫҫи пурри колхозниксене пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫре пысӑк пулӑшу пама пултарать. Иртнӗ ҫулта пурҫӑн хуртне ҫитерсе усрама колхозсене 214 гектар юман вӑрманне уйӑрса панӑ пулсан, кӑҫалхи ҫул тата 800 гектар уйӑрса пама палӑртнӑ.

Правительство пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫе яланах малти вырӑна хурса, ӑна сарса яма пулӑшса пырать. СССР Совнаркомӗ 1939 ҫулти июнӗн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени пурҫӑн тӑвас ӗҫе малашне те аталантарса пыма условисем туса пачӗ. Ҫак постановлени тӑрӑх, колхозсене пурҫӑн хуртне ӗрчетме колхоз ҫывӑхӗнчи усӑ курмалли вӑрмансенчен 20—30 гектар таран кашни колхозах ахалех усӑ курма уйӑрса параҫҫӗ.

Пирӗн республикӑри пурҫӑн хурчӗ ӗрчетес ӗҫӗн мастерӗсем кӑҫалхи ҫул татах та ытларах пысӑк пахалӑхлӑ коконсем туса илессишӗн кӗрешме Куйбышев облаҫӗнчи колхозсене ӑмӑртӑва чӗнчӗҫ.

Пурҫӑн пирӗн промышленноҫа питӗ кирлӗ япала. Вӑл оборона промышленноҫне те питӗ пысӑк усӑ парать.

Иртнӗ ҫулсенче туса ирттернӗ опытсене шута илсе, малашне пурҫӑн хуртне ӗрчетес ӗҫе пур колхозсенче те вӑйлӑн сарса ямалла, ку ӗҫе массӑллӑ ӗҫ туса хумалла.

Агроном Н. КОНДАКОВ.

Германи Делегацийĕн Председателĕ тухса кайни

Кăçалхи январĕн 14-мĕшĕнче Германи Делегацийĕн Председателĕ Ютçĕршыв Еçĕсен Министерствин Посланникĕ г-н К. Шнурре Мускавран тухса кайнă.

Белорусски вокзалта Германи Делегацийĕн Председательне Ютçĕршыв Еçĕсен Министерствин Посланникне г-н К. Шнуррене çаксем ăсатса янă: ССР Союзĕн Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Д. Крутиков юлташ, Ютçĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссариачĕн Генеральнăй Секретарĕ А. А. Соболев юлташ, Ютçĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссариачĕн Центральнăй Европа отделĕн заведующийĕ В. Н. Павлов юлташ, Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй чаçĕн начальникĕ С. А. Шивков юлташ, Ютçĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй отдел заведующийĕн заместителĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн Суту-илÿ договорĕсен отдел секторĕн начальникĕ С. П. Точилин юлташ, çавăн пекех Германин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕпе г-н фон дер Шуленбургпа пĕрле Германи Посольствин составĕ. (ТАСС).

Болгари опроверженийĕ

СОФИЯ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. «Ютçĕршывсенче Германи войскисем Болгарине куçса пынă тата çакăн пирки дипломатиллĕ демаршсем тунă текен тенденциллĕ хыпарсем сарнă май, Болгарири телеграф агентстви çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: Болгарине нимĕнле ютçĕршыв войскисем те килсе кĕмен, Болгари правительстви ютçĕршывсен правительствисем умĕнче нимĕнле демаршсем те туман, мĕншĕн тесен ун пек демаршсем валли нимĕнле сăлтав та çук».

Болгарири хаçатсем ТАСС заявленине пичетлесе кăларнă

СОФИЯ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Болгарири «Мир» тата «Слово» хаçатсем ТАСС заявленине пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă.

Венгрире Румыние хирĕçле демонстрацисем туса ирттернĕ

БУДАПЕШТ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Румынири хаçатсемпе радио Венгрие хирĕçле кампани сарса янă пирки январĕн 12-мĕшĕнче Дьордьосентмиклош хулинче протест демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Демонстрацире 25—30 пин çын пулнă. Кездивашархей хулинчи демонстрацине 12 пин секлер (Трансильванири Секейфэлд районĕнче пурăнакансем) пухăннă. Румынире, секлерсем наци тĕлĕшĕнчен румынсем пулса тăраççĕ, тесе çырнине хирĕç демонстрантсем татăклă протест панă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра, Цзянси провинцийĕн çурçĕр пайĕнче Японин пин çынлă отрячĕ, авиаципе броневиксем пулăшнипе, январĕн 10-мĕшĕнче Наньчанран кăнтăр-хĕвелтухăç енче, 35 километрта, китаецсен позицийĕсене атакăланă. Китаецсем каялла чакнă. Тепĕр кунне Китай войскисем контрнаступлени тунă та, кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн, хăйсен малтанхи позицийĕсене йышăннă. Японецсен чылай пысăк çухатусемех пулнă. Японецсен темиçе броневикне пĕтерсе тăкнă.

Хубэй провинцинче китаецсем Японин çар поездне крушени тунă, вăл поезд Ханькоуран çурçĕр еннелле пынă. Японин темиçе салтак тата офицер вилнĕ.

Кăнтăр Китайра — пысăк улшăнусемех пулман. Çурçĕр Китайри ĕçсем çинчен сведенисем çук.

Январĕн 13-мĕш. (ТАСС).

Центральнăй Китайра, Хубэй провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Китай войскисем Тунчэнран кăнтăр енче стратегиллĕ пунктсене пурне те йышăннă. Японин каялла чакакан чаçĕсене хыçалтан хĕстерсе пырса, китаецсем январĕн 11-мĕшĕнче Тунчэн патĕнче стратегиллĕ икĕ пункта атакăланă.

Юлашки эрне хушшинче Японин темиçе пин войскине Динхай утравне антарса хăварнă (вăл утрав Чжэцзян провинцийĕн çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕ патĕнче).

Çурçĕр тата Кăнтăр Китайри фронтсенчи ĕçсем çинчен сведенисем çук.

Январĕн 14-мĕш. (ТАСС).

КĔСКЕН

Юлашки вăхăтра Сиднейран Çывăхри Хĕвелтухăçне кайма океанра çÿрекен 4 пароход тухнă. Вăл пароходсем Австрали салтакĕсене 50 пин çынна турттарса пыраççĕ.

* * *

США валли Тринидад утравĕ çинче тинĕс-çар сооруженийĕсемпе авиаци базисем тума участоксем парасси çинчен килĕшÿ тунă.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Германи командованийĕ çапла пĕлтерет: хĕçпăшаллă разведка тунă вăхăтра Германи самолечĕсем противникăн суту-илÿ тумалли 4 пин тоннăллă суднине путарнă, пĕр крейсера сиен кÿнĕ. Ыран январĕн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Плимутри çар ĕçĕшĕн кирлĕ объектсем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Ĕнер противникăн 4 самолет пĕтнĕ.

Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: январĕн 13-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Çурçĕр Франци сыранĕ çине вĕçсе кĕме хăтланнă. Анчах та вĕсене Германи истребителĕсемпе зенитнăй орудийĕсем чăрмантарнă. Противникăн 2 самолетне персе антарнă.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтереççĕ: иртнĕ каç пуçламĕшĕнче противник самолечĕсем Кăнтăр-Хĕвеланăç Англири пĕр хула çине ик-виç сехет хушши пыра-пыра тапăннă. Бомбăсем тивнипе темиçе пушар тухнă. Пушар нумай çуртйĕре сиен кÿнĕ. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Уэльсри пĕр-пĕринчен инçетре тăракан тĕрлĕ пунктсем çине пырса пăрахнă. Сиенсем пысăках мар.

Январĕн 13-мĕшĕнче сĕм çĕрлеччĕнех Лондонра самолетсенчен сыхланма пĕр тревога та паман.

Ыран январĕн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Францин оккупациленĕ пайĕнчи портсем çине пырса тапăннă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Плимутри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ыран январĕн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсем Плимут порчĕ çине вут чĕртсе яракан бомбăсем 10 пин бомбăна яхăн тата взрыв тăвакан япаласем нумай пырса пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине курса тăнă çынсем каланă тăрăх, бомбăсем питех те пысăк сиен кÿнĕ.

ГРЕЦИПЕ ИТАЛИ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂ

АФИНЫ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Грецири телеграф агентстви Греци командованийĕ ĕнер каçхине пичетлесе кăларнă сводкăна парать. Сводкăра çапла каланă: фронтра пысăках мар активлăх палăрать. Греци войскисем 4 танк туртса илнĕ тата темиçе çынна, вăл шутрах 2 офицера, тыткăна илнĕ.

Греци государство хăрушăсăрлăхĕн министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: январĕн 13-мĕшĕнче противник авиацийĕ Превеза çине бомбăсем пырса пăрахнă. Темиçе çурта çĕмĕрсе тăкнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фронтăн центральнăй секторĕнче Греци войскисем, кĕтмен çĕртен атака туса, итальянецсене вăйлă укрепленилле позицисенчен хĕссе кăларнă. Фронтăн çурçĕр секторĕнче хаяр çапăçусем пыни çинчен пĕлтереççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Греци войскисем Валонăна каймалли тĕп çул çинче вырнаçса тăракан Дукатирен çурçĕр еннелле пĕр миля çурăра çапăçаççĕ. Грексем итальянецсен контратакисене сирсе яраççĕ. Тепелене секторĕнчен илнĕ сведенисем тăрăх, грексем Леванипе Фратарине туртса илнĕ, Вийос юханшывĕнчен хĕвелтухăç еннелле малалла кайса пыраççĕ. Вĕсем Валонăна çурçĕр енчен пырса атакăлама шутлаççĕ. Томорица юханшывĕн аял вĕçĕнчи секторĕнче, Ромасипе Тереньяк хушшинче, хаяр çапăçу пырать.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци влаçĕсен представителĕсем çапла каланă: çыранри секторта тата Клисурăран çурçĕр енчи районра грексем чылаях пысăк çитĕнÿсем тунă. Грексем Тепеленене туртса илни çинчен калакан пĕлтерÿ тĕрĕсленсе çирĕпленмен-ха.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Грецири фронтра — ытти чухнехи пекех разведка тăвакан отрядсемпе артиллери ĕçĕ палăрать.

Киренаикире—Тобрук фронтĕнче артиллери активлăхĕ тата Джарабуб йĕритавра, пушхирте, Италин моторизованнăй чаçĕсен активлăхĕ палăрать.

Вăтаçĕр тинĕсĕн центральнăй районĕнче Германи авиаци корпусĕн самолечĕсем противник карапĕсен икĕ эскадрине атакăланă. «Бирмингам» йышши пĕр крейсере сиен тунă.

Тунис проливĕнче Италин икĕ миноносецĕ Англи карапĕсен пысăк соединенине атакăланă. Противникăн пĕр крейсерĕ путнă. Итали миноносецĕсемпе противникăн эсминецĕсем хушшинче çапăçусем пулнă, çакăн чухне противникăн икĕ эсминецĕ сиенленнĕ, вĕсем çинче пушарсем тухнă. Италин пĕр миноносецĕ путнă. Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвеланăç пайĕнче Итали самолечĕ противникăн пысăк карапĕ çине торпеда пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра Итали авиацийĕ Англо-Египетски Суданăн хăшпĕр пункчĕсенче противникăн салтаксемпе каякан грузовикĕ тата унăн оборона укрепленийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Январĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Туринпа Савильяно çине бомбăсем пăрахнă. Январĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Турин, Венеция тата Катания çине бомбăсем пăрахнă. Пысăк сиенех тăвайман. Çавăн пекех çынсем хушшинче те вилнисемпе аманнисем нумай мар. Противникăн икĕ самолетне персе антарнă.

РИМ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Грецири фронтра разведка тăвакан отрядсемпе артиллери активлăхĕ палăрать.

Киренаикире пирĕн артиллери Тобрук районĕнче противникăн механизированнăй чаçĕсем çине пенĕ. Джарабуб зонинче разведка тăвакан отрядсемпе артиллери активлăхĕ палăрать. Противник авиацийĕ Киренаикири хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем çук.

Хĕвелтухăç Африкăра Англо-Египетски Судан районĕнче вăрçă ĕçĕсем кăштах пыни палăрать тата Галлабат зонинче пĕр-пĕрне хирĕç артиллерирен персе тăни сисĕнет.

Январĕн 9-мĕшĕнче Итали самолечĕ тата унăн тепĕр торпеднăй катерĕ противникăн подводнăй лодкине путарнă.

Италири хаçатсем Вăтаçĕр тинĕсĕнчи операцисем çинчен

РИМ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Италири хаçатсем Вăтаçĕр тинĕсĕнче юлашки кунсенче пулса иртнĕ вăрçă операцийĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнине паллă тăваççĕ. «Трибуна» хаçат çапла çырать: тинĕсре юлашки кунсенче пулса иртнĕ çапăçусем Вăтаçĕр тинĕсĕнчи çул англичансемшĕн ирĕк маррине кăтартса пачĕç.

«Джорнале д"Италиа» хаçат юлашки сведенисем тăрăх çакăн пек вывод тăвать: Итали авиацийĕпе флочĕ тата Германин авиаци корпусĕн пирвайхи отрячĕсем туса ирттернĕ ĕçсем хыççăн Англин тинĕс çинчи вăйĕсене чылаях пысăк сиен кÿнĕ. «Малайа» йышши линкора сиен кÿнĕ (линкор водоизмещенийĕ 35 пин тонна). Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвеланăç пайĕнче пысăк суднăна торпедăпа пенĕ; нимĕçсем «Бирмингам» йышши 10 пин тоннăллă крейсера торпедăпа персе сиенленĕ: Итали миноносецĕсем 2 эсминеца сиен кÿнĕ; Итали вăйĕсем пĕр авианосеца торпедăпа пенĕ, теприне Германи самолечĕсем сиен кÿнĕ; Италин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем пĕр крейсера сиен кÿнĕ; Германин авиаци корпусĕн самолечĕсем пĕр эсминеца сиенленĕ; Мальта утравĕн сыранĕсем патĕнче 2 парохода сиен кÿнĕ; Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвеланăç пайĕнче 2 парохода сиенленĕ. Кунсăр пуçне Италин çăмăл çар карапĕсем пĕр крейсера, икĕ подводнăй лодкăна торпедăпа персе путарнă. Атлантика океанĕнче Англипе Грецин 2 пароходне путарнă.

≈≈≈≈≈≈≈≈

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ кăларнă коммюникене парать. Коммюникере çапла каланă: Ливири лару-тăру улшăнман. Суданра, Кассалăпа Галлабат секторĕнче, патрульсен активлă ĕçĕсем пыраççĕ. Противника çухатусем кÿнĕ. Ытти фронтсенче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Англи артиллерийĕ Тобрукăн оборона валли тунă укрепленийĕсем çине персе тăрать. Англичансем хулана хирĕç штурм пуçлама хатĕрленеççĕ. Тобрук гарнизонĕнчи войскăсен хисепĕ Барди гарнизонĕнче пулнă войскăсен хисепĕнчен чылай пĕчĕкрех, тесе шутлаççĕ.

Рейтер агентстви, Суданран илнĕ сведенисем тăрăх, çапла пĕлтерет: Метемма районĕнче Англи патрулĕ Итали отрядне чылаях пысăк поражени кÿнĕ. Итальянецсен çапăçу хирĕнче 40 çын вилсе тата нумай çын аманса юлнă.

«Ньюс кроникл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Ливире Итали аэродромĕсем вырнаçса тăракан районсенче пур çĕрте те пекех Англи авиацийĕ пуç пулса тăрать. Итальянецсен Эль-Эдемри пысăк аэродромне туртса илнĕ хыççăн, Тобрукпа Бенгази хушшинче вырнаçса тăракан ытти аэродромсемпе базăсенчен, вăл шутрах Бомбапа Дернари базăсенчен те, итальянецсем тухса кайнă.

Ленин кунĕсем умĕн

Хутар ялĕ (Çĕмĕрле р.) 70 çул ĕлĕкрех, Владимир Ильич Ленинăн ашшĕ—Илья Николаевич шкул уçнă чухне, çак ял ытла та чухăн пулнă. Хресченсем çитмен пурнăçпа пурăннă. Шкула пĕчĕк йывăç çуртра уçнă пулнă. Унта пурĕ те 12 ача кăна вĕреннĕ. Халь вăл культурăллă ял пулса тăчĕ. Ленин кунĕсем умĕн, Хусанти киностудийĕн Шупашкарти пункчĕ, Хутар ялне кайса кино-журнал ÿкерет.

Кинооператор Тимкин юлташ пирĕн корреспондента çакăн пек каласа пачĕ: — Эпир Хутар ялне ÿкерме тивĕçлĕх илтĕмĕр. Çак чыслă ĕçе пурнăçласси пирĕншĕн калама çук пысăк ĕç пулса тăрать. Илья Николаевич Хутарта шкул уçассишĕн тăрăшса ĕçленине тĕплĕн кăтартса парас ĕмĕтпе, унăн ĕçĕсене кăтартса паракан картинăсене нумай ÿкеретпĕр, — тет вăл.

Шкултан вĕренсе тухнисенчен нумайĕшĕ халăх ĕçĕнчен пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен паллăраххисене кино çине ÿкереççĕ.

Хутарта ÿкернĕ картинăсемпе киножурналта усă кураççĕ. Хусанти киностуди коллективĕ Ленин вилни XVII çул тултарнă кун тĕлне киножурналсем валли материалсем хатĕрлесе çитерме обязательство илнĕ пулнă.

—o—

Ленин мавзолейне 18 миллион çын кĕрсе курнă

Ленин Мавзолейне кунсеренех пиншер çын кĕрсе тухать. Çынсем инçетри çурçĕрпе Кавказран, Украина çеçенхирĕсемпе Çĕпĕр тайгисенчен, хуласемпе ялсенчен, шахтерсен поселокĕсемпе казаксен станицисенчен килеççĕ.

Ленин Мавзолейĕ патĕнче чи тĕрлĕ нациллĕ, профессиллĕ, тĕрлĕ çула çитнĕ çынсене курма пулать. Мускаври рабочипе юнашар — Донбасс горнякĕ, Узбекистан хлеборобĕ, Инçет-Хĕвелтухăç колхозникĕ, Ленинградри ученăй, чикĕри застава боецĕ. Столицăна пыракан кашни çын Мавзолея кĕрсе курма тăрăшать.

Халĕ те, январĕн шартлама сивĕ кунĕсенче, Мавзолей уçăличчен нумай малтанах çынсен ушкăнĕсем пухăнаççĕ. Мавзолейăн алăкĕнчен çынсем хуллен, пĕр сасă кăлармасăр, кĕреççĕ, миллионсен чĕринче пурăнакан çыннăн хаклă та юратнă сăнарне ĕмĕрлĕхех асра хăварма тăрăшаççĕ.

1924 çултанпа Ленин Мавзолейне 18 миллион çын ытла кĕрсе тухнă. 1940 çулта кăна унта икĕ миллион çын ытла кĕрсе курнă. (ТАСС).

—o—

Бондаревскипе Лилиенталь—СССР гроссмейстерĕсем

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ ССР Союзĕнчи шахматистсен XII чемпионачĕнче çĕнтерне, турнирта пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене пайланă Бондаревскипе Лилиентальăн спортпа творчество ĕçĕнчи пысăк çитĕнĕвĕсене паллă тунă.

«Наука» спорт обществин (Дон çинчи Ростов) шахматистне Бондаревскине тата «Энергия» спорт обществин (Мускав) шахматистне Лилиенталя СССР гроссмейстерĕсен званине панă.

* * *

Бондаревский — Совет Союзĕнчи çамрăк шахматистсен талантлă представителĕсенчен пĕри — çамрăклах пысăк ăмăртусене хутшăнма пуçланă. 1940 çултан пуçласа вăл тăтăшах пысăк турнирсенче вылять, ССР Союзĕнчи шахматистсен Х турнирĕнче СССР мастерĕн званине илет. Малалла Бондаревский Пĕтĕм Союзри XI чемпионатра, 1939 çулта тĕнчери шахматистсен турнирĕнче вылять. Вăл хăй чаплă тактик пулнине кăтартса панă.

Лилиенталь, хăй çамрăк пулсан та, тĕнчери нумай турнирсенче выляна, шахматистсем хушшинче ăна — талантлă шахматиста — лайăх пĕлеççĕ. Лилиенталь тĕнчипех паллă шахматистсене те сахал мар çĕнтернĕ. Вăл шахматистсен пĕтĕм тĕнчери чылай ăмăртăвĕсенче — Штубенри, Уйпештри, Ситгестри, Берселонăри ăмăртусенче — пĕрремĕш вырăнсем кĕрешсе илнĕ.

1939 çулта вăл Мускав чемпионĕн званине кĕрешсе илнĕ, 1940 çулта кĕркунне ССР Союзĕнчи шахматистсен XII чемпионатне пĕр пораженисĕр вылясa пĕтернĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ предприятисене ĕçе яраççĕ

ЧЕРНИГОВ. Çăмăл промышленноçăн облаçри управленийĕ çынсем хăйсем паракан чĕртаварпа ĕçлекен çĕнĕрен 10 предприяти организацилет. Шорский районра пĕрремĕш кварталта тир-сăран завочĕ строя кĕрет. Февральте Чернигов хулинчи михĕсем тăвакан фабрика продукци пама пуçлать. Новгород-Северскинче иккĕмĕш кварталта хуçалăхра кирлĕ вĕренсем хатĕрлекен фабрика ĕçлеме пуçлать.

Вырăнти промышленность продукци кăларассине ÿстерет

СТАЛИНГРАД. Республикăри вырăнти промышленность Наркомачĕн предприятийĕсем кăçал иртнĕ çулхинчен 6 миллион тенкĕлĕх продукци ытларах параççĕ. Вырăнта топливо — çĕркăмрăк, торф кăларасси, стройматериалсем хатĕрлесси те чылаях ÿсет. Хĕвелтухăç Памирта çĕркăмрăк тата тăвар кăлармалли шахтăсене эксплоатацине параççĕ. Çемçе мебельсем, спорт хатĕрĕсем, вылямалли япаласем туса кăларас ĕçе пуçăнаççĕ. Шкафсем, сĕтелсем, кроватьсем туса кăларасси пĕрре çурă хут ÿсет.

РСФСР Совнаркомĕнче

РСФСР Совнаркомĕ январĕн 13-мĕшĕнче республикăра физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатмалли мероприятисем çинчен постановлени йышăннă.

РСФСР Совнаркомĕ физкультура ĕçĕ партипе правительство лартнă задачăсенчен юлса пынине палăртнă. Еçсынни депутачĕсен крайсенчи тата облаçсенчи Совечĕсен исполкомĕсене тата автономлă республикăсенчи Совнаркомсене январь уйăхĕнче физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатмалли мероприятисем çинчен ыйту лартса сÿтсе-явма, ку ыйтăва сÿтсе-явнă чухне уйрăмах физкультура ĕçне ялсенче организацилесси çине тимлĕрех çаврăнса пăхма хушнă.

РСФСР-ти хуласенчи йĕлтĕр тата шыв станцисем, район центрĕсенче — спорт площадкисем тăваççĕ. Еçсынни депутачĕсен крайсенчи тата облаçсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тата автономлă республикăсенчи Совнаркомсем вырăнти промышленность предприятийĕсенче спорт инвентарĕсем, пуринчен малтан йĕлтĕрсем туса кăларассине организацилемелле.

РСФСР Совнаркомĕ РСФСР Наркомпросне 1941 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса педагогика институчĕсемпе училищисем çумĕнче физкультура енĕпе факультетлă курссем организацилемелли тата пединститутсемпе университетсенчи аслă курссенче обязательнăй предмет—«Организация и методика физического воспитания в школе» предмета вĕренмелли проектсене туса хатĕрлеме хушнă.

1941 çулта область, край тата республика центрĕсенче ачасен спорт шкулĕсене уçаççĕ, вăл шкулсем ачасен помощникĕсене, инструкторсене, — спортăн уйрăм енĕсемпе учительсен помощникĕсене, инструкторсене судьясене т. ыт. вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

РСФСР Наркомпросĕн 1941 çулта вăтам шкулсем çумĕнче пуринче те физкультура площадкисем тумалла. РСФСР Совнаркомĕ хушнă тăрăх, ведомствăсемпе организацисем пурте хăйсен стадионĕсене, йĕлтĕр тата шыв станцийĕсене, катокĕсене, гимнастика залĕсене тата ытти физкультура сооруженийĕсене кăнтăрлахи вăхăтсенче усă курма шкулсене тÿлевсĕр памалла.

РСФСР Наркомздравне пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче вĕренекенсене пăхса контроль туса тăма 70 хулара лечебнăй физкультура кабинечĕсем организацилеме хушнă. Медицина институчĕсенчи аслă курссенче ятарласа уйăрнă «Методика лечебной физкультуры и врачебного контроля» предмет пулмалла. (ТАСС).

Комбинат çути

Куславкка комбиначĕн вăйлă электростанцийĕ хĕлĕн-çăвĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлет. Вăл паракан электроэнерги комбинатри станоксене ĕçлеттерет, поселока çутатать тата чăннипех пĕтĕм тавраналне сарăлать.

Чугунçул тăрăх Тĕрлемес станцине çитсенех комбинат çутине куратăн,— кунти лампăсем комбинатран килекен электроэнергипе çутатса тăраççĕ.

Куславккаран 15 километрти Аманикре те — комбинат çути йăлтăртатать.

Хальхи вăхăтра 17 ял комбинатран электроэнерги илсе усă кураççĕ. Çак ялсенчи пурăнмалли пÿртсемпе шкулсенче, учреждениесенче, колхозсен обществăллă вырăнĕсенче — 2.229 электричество лампочки çутатаççĕ. Колхозсенче электричество вăйĕпе ĕçлекен моторсем 30 лартнă, ку шутра —5 арман тата 1 çăм арманĕ.

Кăçалхи çул 16 колхозра молотилкăсене электричество вăйĕпе ĕçлеттернĕ. Çав молотилкăсене лаша вăйĕпе ĕçлеттерес пулсан, мĕнпурĕ 234 лаша кÿлмелле пулнă пулĕччĕ!

Иртнĕ 1940 çулта колхозсем çутатма тата моторсене ĕçлеттерме комбинатран 312 пин киловатт-сехет электроэнерги илнĕ; 1941 çулта 380 пин киловатт-сехет илме палăртса хунă. 1941 çула валли тунă план тăрăх кунта тата 5—6 яла электрификацилеме, халичченех электрификациленĕ чылай ялсенче электролинине вăрăмлатма палăртнă.

Кунсăр пуçне, Куславкка районĕнче Куснарти гидроэлектростанци ĕçе кĕнĕ,—вăл тăвата яла çутă парса тăракан пулать.

Ф. А.

Куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав панă

Енĕшкассинчи промартель çумĕнче (Красноармейский р.) 1936 çулта физкультура коллективĕ организациленĕ. Ку коллектив «Восход» спорт обществинче чи лайăх ĕçлекен коллективсенчен пĕри шутланса тăрать.

1940 çулта коллектив Сталинла виççĕмĕш пятилетка ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса «Восход» спорт обществин Центральный Совечĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ. Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче унăн ĕçĕсене тĕрĕсленĕ пулнă. Çакăн хыççăн «Восход» спорт обществин Центральный Совечĕ Енĕшкассинчи физкультура коллективне куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав пама йышăннă. Унăн председательне Ф. Г. Гаврилов юлташа 500 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Коллективри спорт секцийĕсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Гимнастика секцинче 30 çын, çăмăл атлетикăпа 69 çын, йĕлтĕр секцинче 71 çын, спорт вăййисен секцинче 73 çын тăраççĕ.

Коллектив 1940 çулта спорт енĕпе ирттернĕ ăмăртусене пурĕ 1063 çын хутшăннă. Районри ăмăртусенче те паха тĕслĕхсем кăтартнă. Йĕлтĕрпе 1-мĕш вырăн, çăмăл атлетикăпа 1-мĕш вырăн, волейболпа 2-мĕш вырăн йышăннă. Кунсăр пуçне «Восход» спорт обществин Чăваш Совечĕ ирттернĕ ăмăртусенче те активлăн хутшăннă.

Физкультура коллективĕ Красноармейский районри физкультура организацисене те пулăшса пырать.

Спорт обществинче тăракан членсен йышĕ те ÿссех пырать. Паянхи куна членра тăракансем 151 çынна çитнĕ тата «Юный восходовецсем» 59 çын шутланать.

Спорт обществин членĕсем производствăра та стахановла ĕçлеççĕ. М. С. Ядвуровпа А. Дмитриева физкультурниксем артельте паллă стахановецсем пулса тăраççĕ.

Г. ИВАНОВ.

Хоккей сезонĕ пуçланчĕ

Январĕн 12-мĕшĕнче «Спартак» спорт обществин катокĕ çинче хоккей вăййисен сезонĕ уçăлнине чысласа ирттерчĕç.

Вăл кун Шупашкар хулинчи спорт обществисен 6 команди юлташла тĕл пулса вылярĕç. «Медик» спорт обществин хĕрарăм команди «Спартак» командипе вылярĕ.

Хоккеистkăсен вăййи 4:1 шутпа, «Медик» команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

«Спартак» обществин пĕррешĕш командипе хăйĕн çамрăксенчен тăракан командипе тĕл пулса выляна. Вăйă 6:4 шутпа, çамрăксен команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

«Восход» спорт обществин команди «Динамо» обществин пĕррешĕш командинчен 7:1 шутпа выляса илсе, пысăк çĕнтерÿ турĕ.

—o—

Професси суйласа илесси çинчен

ЭЛЕК. («Чăваш Коммуни» корр.) Январĕн 11-мĕшĕнче вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче отлично вĕренекенсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва 70 ача пухăннă.

Вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулĕн итогĕсемпе вĕренÿ ĕçĕнчи малашнехи задачăсем çинчен райçутĕç пайĕнчен Золотов юлташ доклад турĕ. Ун хыççăн ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кузьмин юлташ отличниксене професси суйласа илесси çинчен лекци вуласа пачĕ. Отличниксенчен пренире тухса калакансем чылай пулчĕç.

„На штурм“ çар вăййине выляма хатĕрленеççĕ

Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсем «На штрум» çар вăййине выляма хатĕрленеççĕ. Шкулта винтовкăсем, станковăй пулеметсем, ручной пулеметсем туса хатĕрленĕ.

В. МИХАЙЛОВ.

Çамрăк химиксен олимпиади

Иккĕмĕш çул ĕнтĕ Н. М. Шверник ячĕпе тăракан техникăллă Центральнăй станци çамрăк химиксен олимпиадине ирттерет. Олимпиадăна ирттерни шкул ачисене шкулта хими предметне тĕплĕн вĕренме пулăшать.

Иккĕмĕш тур 1940 çулти октябрь уйăхĕнче пуçланчĕ. Çамрăк химиксен олимпиадине пирĕн республикăран 18 шкул хутшăннă. Халĕ 2-мĕш тур вĕçленчĕ. Иккĕмĕш турта Мургашри (Сĕнтĕр р.) вăтам шкулта вĕренекенсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. 29 участникрен 28-шĕ 3-мĕш заочный тура хутшăнма тивĕç илчĕç.

111 пин тенкĕ тÿленĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри перекет касси 1940 çулта тĕрлĕ заемсем тăрăх выляв укçи 111 пин тенкĕ тÿленĕ. Ку вăл 1939 çултинчен 70 процента яхăн ытларах шутланать.

1940 çулта уйрăмăнах IV-мĕш кварталта ытларах тÿленĕ. Виçĕ уйăх хушшинче пĕтĕмпе 39.490 тенкĕ, вăл шутран декабрь уйăхĕнче 16 пин тенкĕ тÿленĕ.

Хар. Лисин.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Совнаркомĕ 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановленипе Валентин Вячеславович Таврин юлташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн Заместительне лартнă.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Еçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2192

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.